ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛĔШĔР!

ЧĂВАШ КОММУНИ

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН ТАТА ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНĂЙ СОВЕЧĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

1952 çул
Март
5
юнкун
№ 47 (8699)
Хакĕ 20 пус.
35-мĕш çул тухать.

ПАЯНХИ НОМЕРТЕ:

Вăрман хатĕрлев планне тултармалли стахановла уйăхлăх (1 стр.).
СССР Верховнăй Совечĕн сессийĕ ячĕпе (1 стр.).
П. Слепенков.—Атăлпа Дон хушшинчи канал валли (1 стр.).
ПАРТИ ПУРНĂÇĔ. И. Сергеев. — Коммунистсен вĕренĕвне куллен ертсе пымалла (2 стр.).
А. Чехопин, Г. Мытиков, Н. Пушкин.—Çамрăксен ыйтăвĕсене тивĕçтересси—чыслă та ответлă ĕç (2 стр.).
П. Щипцов, С. Аслан.—Инженер-технолог (2 стр.).
Нимĕçсен фашистла захватчикĕсем поляксен тыткăна лекнĕ офицерĕсене Катынь вăрманĕнче персе вĕлернине тĕпчесе пĕлме Ятарласа тунă Комисси Пĕлтерни (3—4 стр.).
Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунĕ умĕн (4 стр.).
Китай халăхĕ американецсем Корейăра бактериллĕ хĕçпăшалпа усă курнине хирĕç протестлет (4 стр.).
Пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен федерацийĕ американецсем Корейăра бактериллĕ хĕçпăшалпа усă курнине хирĕç протестлет (4 стр.).
Корейăри ĕçсем (4 стр.).

Кино работникĕсен чыслă тивĕçĕ

Пĕтĕм совет искусстви пекех, кино тĕнчере чи малта пыракан искусство пулса тăрать. Вăл ответлă, пархатарлă ĕç тăвать: совет çыннисене Тăван çĕршыва чунтан-чĕререн юратма, Ленин-Сталин партийĕн аслă ĕçĕсем ăпăçлăн çĕнтерсе пырассине çирĕп шанса тăма, кĕрешÿри пур йывăр йывăрлăхсене те çĕнтерме вĕрентет.

«Совет влаçĕ аллинче,—тет Сталин юлташ,—кино питĕ пысăк та хăватлă вăй пулса тăрать».

Массăсен шухăш-кăмăлне çĕклемелли пысăк майсемпе усă курса, кино пирĕн большевиксен партине ĕççыннисене коммунизмлă воспитани парас ĕçре пулăшать, коммунизм строительствинче çĕнĕрен çĕнĕ çĕнтерÿсем тума ĕççыннисене анлăн мобилизацилеме, совет çыннисен идейăллă-политикăллă шайĕпе вĕсен культурлăхне хăпартма пулăшать.

ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ идеологи ыйтăвĕсем тăрăх йышăннă историллĕ постановленийĕсене пурнăçласа пырса, совет кинематографи работникĕсем юлашки çулсенче лайăх кинокартинăсем туса кăларчĕç. Вĕсене совет çыннисем кăна мар, ытти çĕршывсенчи ĕççыннисем те юратса пăхаççĕ. Юлашки çулсенче пысăк художествăллă фильмсемпе пĕрлех наукăллă-документлă кинокартинăсем те нумай кăларнă. Вĕсем совет çĕршывĕн чаплă çĕнтерĕвĕсем çинчен каласа параççĕ, наукăллă пĕлÿсем сараççĕ, производствăри малта пыракан новаторсен опычĕсене пропагандăлаççĕ.

Большевиксен партийĕпе Совет правительстви кинофикаци ĕçне пĕрмай аталантарса пыма тăрăшаççĕ. Социализмлă промышленность çĕнĕ, паха киноаппаратсем çулсерен нумай туса кăларать. Пирĕн республикăна кăна юлашки çулсенче 300 ытла кинопередвижка кÿрсе килнĕ. Юлашки виçĕ çул хушшинче ялсенчи киноустановкăсемпе передвижкăсен хисепĕ виçĕ хут ытла ÿснĕ, кинофильмсен фончĕ те пуянланнă. Кĕске вăхăтрах «Берлина илни», «Ылтăн Çăлтăр кавалерĕ», «Тарас Шевченко», «Хăюллă çынсем» фильмсене чăвашла куçарса кăларнă. Çаксем вĕсем пирĕн республикăра кино кăтартас ĕçе татăклăнах лайăхлатма май параççĕ.

Кино совет çыннин кулленхи пурнăç йăлине кĕрсе вырнаçнă. Кашни çĕнĕ, паха кинофильма вăл хавасланса кĕтсе илет. Киномеханик—колхозлă ялăн кĕтнĕ хăни. Культурăллă, опытлă киномеханике колхозниксемпе колхозницăсем—çамрăкки сем те, ваттисем те,—хисеплеççĕ, кино курма йышлăн пухăнаççĕ.

Анчах пирĕн кинофикаци работникĕсем совет çыннисен куллен ÿссе пыракан культура ыйтăвĕсене пур чухне те кирлĕ пек тивĕçтереймеççĕ. Иртнĕ çулта кино кăтартмалли плана пĕр районта та тултарман. Ку ĕç кăçал та палăрмаллах лайăхланни курăнмасть. Январь уйăхĕн планне республикăра 80 процент çеç тултарнă. Ялсенче вара ку ĕç питĕ сÿрĕк пулса пырать. Ишлей, Хĕрлĕ Чутай, Çĕнтĕрвăрри, Советски, Вăрмар, Тăвай, Çĕнтĕр тата Елчĕк районĕсенче кино кăтартса укçа-тенкĕ пухмалли плана 27—37 процент кăна пурнăçланă.

Çакăншăн чи малтан Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ çумĕнчи Кинофикаци управленийĕ тата районсенчи кинофикаци пайĕсем айăплă. Вĕсем кино кăтартас ĕçе тивĕçлĕ ертсе пымаççĕ, çак ĕçре ответлăха туймаççĕ. Çавăнпа ĕнтĕ час-часах киноаппаратсем ĕçлемесĕр лараççĕ. Иртнĕ çулта киноаппаратсем, пурне пĕрле илсен, 6 пин кун ытла ĕçлемесĕр ларнă. Ку вăл киномеханиксем çитмен пирки тата киноаппаратсем юсавлă пулман пирки пулнă. Киномеханиксем халĕ те çитмеççĕ-ха, вĕсем те пулин час-часах улшăнса тăраççĕ. Киномеханиксем хушшинче хĕрачасем питех те сахал.

Кинофикаци управленийĕ тата Культпросвет учрежденисен работникĕсен профсоюз обкомĕ киномеханиксен квалификацине ÿстерес тĕлĕшпе пачах çителĕксĕр ĕçлеççĕ, малта пыракан киномеханиксен опытне сармаççĕ, киномеханиксем хушшинче социализмлă ăмăртăва йĕркелемен. Республикăра кино кăтартас тĕлĕшпе отлично ĕçлекен бригадăсем, киноаппаратсене социализмлă упраса усрама обязательство илнĕ киномеханиксем халĕ те çук-ха.

Халăха кино кăтартас ĕçпе парти райкомĕсем те сахал интересленеççĕ. Чылай çĕрте уйăхĕ-уйăхĕпе кинокартинăсем пулмаççĕ. Нумай киномеханиксем маршрутсемпе графика пăхăнса ĕçлемеççĕ. Парти райкомĕсем çак çитменлĕхсене вăхăтра асăрхамаççĕ, курсан та вĕсене сийĕнчех пĕтерме тивĕçлĕ мерăсем йышăнмаççĕ. Парти райкомĕсем кинофикаци ĕçĕсем çинчен сайра хутра çеç сÿтсе яваççĕ. 1951 çулта, сăмахран, ку ыйтăва мĕн пурĕ те сакăр районти парти комитечĕ кăна сÿтсе явнă.

Вырăнсенче час-часах çакăн пек тĕслĕхсене курма пулать: чылай çĕрте ялти клубсенче тирпейлĕх çук. Вĕсене хутса ăшăтмаççĕ, юсамаççĕ, илем кÿмеççĕ. Тепĕр çĕрте ларса-тăма тенкел-пукансем те çук. Кинопередвижкăсене ялтан яла илсе çÿреме час-часах транспорт памаççĕ. Киномеханиксене тивĕçлĕ условисем туса паман. Çаксемшĕн чи малтан райсовет исполкомĕсем ответлă. Вырăнти Советсен кинофикаци ĕçне лайăхлатассишĕн хытăрах тăрăшмалла.

Парти Чăваш обкомĕн бюровĕ, халăха кино кăтартас ĕç çинчен сÿтсе явса, çак ĕçе татăклăнах вăйлатма хушрĕ. Кино кăтартас ĕçе лайăхлатасси—партипе совет органĕсен тата кинофикаци работникĕсен чыслă тивĕçĕ.

Пирĕн кинопередвижкăсен хисепĕ халĕ кашни ялтах уйăхра сахалтан та ик-виçĕ хут кинокартина кăтартма май парать. Çакна пурнăçлама пултарнине Çĕмĕрле районĕнчи кинофикаци работникĕсен опычĕ те лайăх кăтартса парать. Вĕсем январь уйăхĕн планне ăнăçлă пурнăçланă. Кунта кино работникĕсем хăш ялта колхозниксем мĕнле кинокартина кăтартма ыйтнине шута илсе пыраççĕ, киноаппаратсемпе туллин усă кураççĕ, вĕсене ĕçсĕр лартмаççĕ, плана тултарассишĕн вĕсем ăмăртса ĕçлеççĕ. Кино кăтартмалли график, маршрут—вĕсемшĕн çирĕп закон пулса тăрать. Пур çĕрте те Çĕмĕрле районĕнчи кинофикаци работникĕсем пек ĕçлеме май пур, çавăн пек ĕçлемелле те.

Киносеансенче халăх йышлăн пултăр тесе, çĕнĕ кинофильмсем çинчен тĕплĕн ăнлантарса памалла, картина кăтартас умĕн калаçусемпе кĕске лекцисем ирттерес ĕçе йĕркелемелле, организациллĕ-массăллă ĕçе вăйлатмалла. Хăçан ăçта мĕнле кино пуласси çинчен ĕççыннисем малтанах лайăх пĕлсе тăччăр. Çак ĕçре кинофикаци работникĕсене ялти комсомолецсемпе культурăпа сутĕç работникĕсем активлă пулăшма тивĕç. Ялсенче художествăллă кинокартинăсемпе пĕрлех наукăпа техника тата ялхуçалăх ыйтăвĕсем тăрăх кăларнă фильмсене ытларах кăтартас пулать.

Кино кăтартассине лайăхлатас ĕçе киномеханиксем татса параççĕ. Вĕсен политикăллă тата техникăллă вĕренĕвне тивĕçлипе йĕркелемелле. Вĕсене коммунизмлă воспитани парас ĕçе вăйлатмалла. Кунпа пĕрлех механиксене ĕçлеме лайăх условисем туса парассишĕн тăрăшас пулать. Киномеханиксене кулленхи ĕçре пулăшма кашни ялтах кинорганизатор пултăр.

Халăха кино кăтартас ĕç—идеологи фрончĕн паллă участокĕ. Çакна шута илсе, ВКП(б) хула комитечĕсемпе райкомĕсен халăха кино кăтартас ĕçпе тăтăшах интересленмелле, ку ĕçе куллен ертсе пымалла, кино работникĕсен политикăллă тата культурăллă шайне ÿстермелле, вĕсене ĕçре ялан пулăшса пымалла. Çавăн пек ĕçлесен кăна кинопа—ĕççыннисене коммунизмлă воспитани пама пулăшакан, коммунизм строительствинче çĕнĕ çитĕнÿсем тума пулăшакан хăватлă вăйпа—тата анлăрах усă курма пулĕ.

Çĕмĕрле районĕ вăрман хатĕрлев планне тултарчĕ

ÇĔМĔРЛЕ. (Телефонпа). Районти колхозсем кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра вăрман хатĕрлемелли плана срокчен тултарассишĕн ăмăртса ĕçлесе, пайă сăмаха чыслă пурнăçларĕç. Вĕсем кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра йывăç касса хатĕрлемелли плана 115,1 процент, каснă йывăçа çул хĕррине илсе тухмалли плана 101,5 процент, турттарса кăлармалли плана 100 процент тултарчĕç.

Халĕ колхозсем планран ирттерсе йывăç хатĕрлеççĕ.

ВКП(б) райкомĕн секретарĕ А. ФЕДОРОВА.
Райсовет исполкомĕн председателĕ Л. СТАТУЕВ.
Çĕмĕрле вăрманпромхоз директорĕ А. РОЖКОВ.

Н. В. Гоголь вилнĕренпе 100 çул тултарнă ятпа Шупашкарта пулнă чаплă пуху

Ĕнер, мартăн 4-мĕшĕнче, вырăссен аслă писателĕ Н. В. Гоголь вилнĕренпе 100 çул тултарчĕ. Çав ятпа Чăваш государство академи театрĕнче Шупашкар хулинчи ĕççыннисен чаплă пухăвĕ пулса иртрĕ. Унта партипе совет, профсоюзпа комсомол организацийĕсен представителĕсем, писательсем, артистсем, рабочисемпе служащисем пулчĕç.

Пухăва кĕске сăмах каласа Чăваш АССР халăх поэчĕ П. Хусанкай уçрĕ.

Н. В. Гоголĕн пурнăçĕпе творчестви çинчен Чăваш совет писателĕсен правленин председателĕ Л. Агаков юлташ доклад туса пачĕ. Пуху хыççăн концерт пулчĕ.

Мартăн 15-мĕшĕ

Вăрман хатĕрлев планне тултармалли стахановла уйăхлăх

Февралĕн 15-мĕшĕ

Ĕç вăйĕ ытларах кирлĕ

КИРЕ, мартăн 4-мĕшĕ. (Телефонпа). Вăрманпромхозри кадрти рабочисем стахановла уйăхлăха активлă хутшăнчĕç. Уйрăмах коммунист М. Сысуйкин юлташ паха тĕслĕхсем кăтартнине палăртас пулать. СССР Вăрман промышленность министерствипе вăрман промышленноçĕнчи работниксен профсоюзĕн Центральнăй комитечĕ ăна «Чи лайăх тракторист-трелевщик» ятне панă. СССР Верховнăй Совечĕн сессийĕ ячĕпе стахановла вахтăна тăрса, вăл 30 фестметр вырăнне куллен 70—80-шар фестметр, февралĕн 28-мĕшĕнче вара 97 фестметр йывăç çул хĕррине илсе кăларчĕ.

Социализмлă ăмăртура коммунистсем малта пыраççĕ. Вĕсем хастарлă ĕçпе тата хĕрÿллĕ сăмахпа ыттисене хавхалантараççĕ. Коммунистсем Глупов, Боронин юлташсем тата ыттисем те ĕç нормине куллен ирттерсе тултараççĕ.

Чылай механизаторсем, М. Сысуйкин юлташăн меслечĕпе усă курса, задание куллен ăнăçлă тултарса пыраççĕ. Çамрăк тракторист Ильин юлташ хăй тĕллĕн иккĕмĕш уйăх çеç ĕçлет-ха. Вăл хăйĕн пуçарулăхĕпе пултарулăхне кунтан-кун ÿстерсе пырать. Халĕ вăл сменăра 60-шар фестметр йывăç çул хĕррине илсе тухать. Уйăхлăх пуçланнăранпа Бондаренко моторист куллен икшер норма тултарса пырать.

Çавăн пек паха тĕслĕхсем сахал мар пулин те, вăрманпромхоз плана тултарас тĕлĕшпе юлса пырать, йывăç ăсатмалли задание тултараймасть. Çака вăл пуринчен ытларах вăрманпромхоз çумне çирĕплетнĕ Шăхасанпа Çĕрпÿ районĕсем ĕçпе туртăннă çителĕксĕр уйăрса янинчен килет. Турат иртме, йывăç тиесе-пушатма ĕç вăйĕ çитменнипе пула чылай механизмсемпе тухăçлă ĕçлеймеççĕ.

Шăхасан районĕ йывăç турттарса кăлармалли плана 53 процент çеç тултарнă. График тăрăх куллен 250 çын çуран, 290 çын лавпа ĕçлемелле, халĕ 67 çын çуран, 78 çын лавпа ĕçлет. Хăшпĕр колхоз правленийĕсем колхозниксене ертсе пыма ответлă çынсем уйăрса ямаççĕ, çавăнпа ĕç дисциплини япăх. Февралĕн 27-мĕшĕнче Киров ячĕпе тăракан колхоз лавçисем улта лашапа пăрахса хăварса килнĕсене тавраннă. Çав лашасем паянччен ахаль тăраççĕ.

Çĕрпÿ районĕнчен пурĕ 54 лавпа çеç йывăç турттараççĕ. Чылай колхозсенчен вăрмана пилĕк-улта куна çеç пыраççĕ, хăшĕнрисем хатĕрленĕ йывăça приемщиксене памасăрах килĕсене каяççĕ.

Шăхасанпа Çĕрпÿ райсовет исполкомĕсемпе ВКП(б) райкомĕсен колхозниксене стахановла уйăхлăха хутшăнтарас тĕлĕшпе татăклă мерăсем йышăнас пулать.

В. АБАСКИН,
Кире вăрманпромхоз директорĕн политика енĕпе ĕçлекен заместителĕ.

«Чăвашвăрман» трест тата ĕççынни депутачĕсен райсовет исполкомĕсемпе ВКП(б) райкомĕсем тăратнă тăрăх, 1951—1952 çулсенчи кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра вăрман хатĕрлемелли плана срокчен тата ирттерсе тултарнăшăн республикăри Хисеп хăми çине çак колхозсене кĕртнĕ:

ЧКАЛОВСКИ РАЙОНĔ ТĂРĂХ

38. **«Гвардеец»** колхоз (председателĕ **М. Долгов** юлташ, пуçламăш парторганизаци секретарĕ **Н. Горшков** юлташ, вăрман хатĕрлекен бригадăн бригадирĕ **А. Долгов** юлташ). Колхоз йывăç касса хатĕрлемелли плана 105 процент, каснă йывăça çул хĕррине илсе тухмалли плана 100 процент, турттарса кăлармалли плана 104 процент тултарнă.

39. **«Герой»** колхоз (председателĕ **Ш. Ярахановв** юлташ, пуçламăш парторганизаци секретарĕ **Ш. Тукретуллов** юлташ, вăрман хатĕрлекен бригадăсен бригадирĕсем **З. Хасямовпа М. Хавитов** юлташсем). Колхоз йывăç касса хатĕрлемелли плана 101 процент, каснă йывăça çул хĕррине илсе тухмалли плана 100 процент, турттарса кăлармалли плана 102 процент тултарнă.

СОВЕТСКИ РАЙОНĔ ТĂРĂХ

40. **«Прогресс»** колхоз (председателĕ **Г. Андреев** юлташ, пуçламăш парторганизаци секретарĕ **И. Федоров** юлташ, вăрман хатĕрлекен бригадăн бригадирĕ **Н. Артемьев** юлташ). Колхоз йывăç касса хатĕрлемелли плана 100,6 процент, турттарса кăлармалли плана 101,5 процент тултарнă.

КАНАШ РАЙОНĔ ТĂРĂХ

41. **Доронин ячĕпе тăракан колхоз** (председателĕ **И. Кузьмин** юлташ, пуçламăш парторганизаци секретарĕ **С. Филиппов** юлташ, вăрман хатĕрлекен бригадăн бригадирĕ **Ф. Романов** юлташ). Колхоз йывăç касса хатĕрлемелли плана 100,4 процент, турттарса кăлармалли плана 107,6 процент тултарнă.

КУВАКИНО РАЙОНĔ ТĂРĂХ

42. **«8-се марта»** колхоз (председателĕ **Я. Чевакин** юлташ, пуçламăш парторганизаци секретарĕ **В. Звезденков** юлташ). Колхоз йывăç касса хатĕрлемелли плана 106,3 процент, каснă йывăça çул хĕррине илсе тухмалли плана 105 процент, турттарса кăлармалли плана 111 процент тултарнă.

43. **Ленин ячĕпе тăракан колхоз** (председателĕ **М. Пронин** юлташ, пуçламăш парторганизаци секретарĕ **И. Сытов** юлташ). Колхоз йывăç касса хатĕрлемелли плана 100 процент тултарнă.

Плана ирттерсе тултарнă

Красноармейски районĕнчи «Красная Шатьма» колхоз йывăç касса хатĕрлемелли плана 1951 çулхи ноябрь уйăхĕнче 109 процент тултарчĕ. Йывăç турттармалли плана кăçалхи февралĕн 23-мĕшĕ тĕлне 102 процент пурнăçларĕ.

Çак çитĕнĕве вăл организациллĕ-массăллă ĕçе лайăх йĕркеленипе, колхозниксем Тăван çĕршыва йывăç ытларах хатĕрлесе парассишĕн ырми-канми ĕçленипе тунă. Кĕркунне вăрманта ĕçлеме бригадăсем организациленĕ.

Малтанхи кунсенче колхоз йывăç турттарас тĕлĕшпе юлса пынă. Ун çинчен колхозри коммунистсен пухăвĕнче сÿтсе явнă. Колхоз правленийĕ вăрмана лавсем хушса янă. Парти пухăвĕ колхозниксене ертсе пыма Якимов коммуниста хушнă. Плана тултаричченех вăл лавçăсен бригадине ертсе пынă. Вăрманта тăватă коммунист, çичĕ комсомолец ĕçленĕ. Вĕсем массăллă ĕçе лайăх туса пынă. Ĕç хыççăн бригадăсенче кун каçиччехи итогсене сÿтсе явнă, çитменлĕхсене пĕтермелли майсем палăртнă. Боевой листоксенче ĕçре малта пыракансен опычĕсене анлă сутатнă, юлса пыракансене критикăланă.

Йывăç каснă çĕрте А. Артемьева, М. Николаева, В. Васильев, Г. Аврамов юлташсем, йывăç турттарнă çĕрте Г. Матвеев, Р. Никифоров, Р. Максимова, И. Егоров колхозниксем уйрăмах хастарлă ĕçленĕ. Вĕсем ĕç нормине куллен 135—150 процент тултарса пынă.

И. ПАТМАР.

СССР Верховнăй Совечĕн сессийĕ ячĕпе

Ĕçри çĕкленÿ

ВĂРМАР. (Хамăр корр.). Районти предприятисемпе промысла артелĕсенче, колхозсемпе МТС-ра СССР Верховнăй Совечĕн сессийĕ ячĕпе саралнă ăмăрту вăйланса пырать.

Канашри вагонсем юсакан заводри стахановецсен паха пуçарăвĕпе хавхаланса, сĕтел-пукан тăвакан фабрикăри рабочисемпе работницăсем сменăри задание 6—7 сехет хушшинче пурнăçлассишĕн, планран ирттерсе лайăх пахалăхлă продукци туса кăларассишĕн тăрăшаççĕ.

Иртнĕ уйăхра цехсем хушшинчи ăмăртура столярнăй цех мала тухрĕ. Вăл февраль уйăх планне 113 процент тултарчĕ, материалсем чылай перекетлерĕ, продукцин хăйне ларакан хакне пилĕк процент чакарчĕ. Паллă столяр-коммунист Г. Голубев юлташ, çамрăк столярсем—комсомол комитечĕн секретарĕ И. Варламов, комсомолец С. Смирнов тата ытти юлташсем те хăйсен сменăри заданийĕсене 5—6 сехетре пурнăçлаççĕ, питĕ лайăх продукци туса кăлараççĕ. Цехра нормăна тултарайман пĕр рабочи те çук.

Машинăсен цехĕпе механически цехсем те февраль уйăхĕнче лайăх ĕçленĕ. Вĕсем ĕç тухăçлăхне ÿстерсе пынипе пĕрлех нумай материалсем перекетленĕ.

Малта пыракан «Хĕрлĕ Кĕтне», «Большевик», «Дружба», Мичурин ячĕпе тăракан колхозсем СССР Верховнăй Совет сессийĕ уçăлнă кун тĕлне çуракине пур енчен те тĕплĕн хатĕрленсе çитеççĕ. Хăшпĕр колхозсем сезонта вăрман хатĕрлемелли плана пĕтĕмĕшпех пурнăçлаççĕ. МТС мастерскойĕнче тракторсемпе вĕсенчен кăкарса ĕçлемелли машинăсене юсас ĕç вĕçленсе пырать.

Стахановла вахтăна тăрса

КАНАШ. (Телефонпа). Пăравус депо коллективĕ СССР Верховнăй Совечĕн сессийĕ ячĕпе февралĕн 23-мĕшĕнче стахановла вахтăна тăчĕ. Мартăн 1-мĕшĕ тĕлне машинистсем йывăр тиенĕ поездсем пурĕ 79 илсе çÿренĕ, нормăран ирттерсе 13,4 пин тонна груз турттарнă.

Машинистсем йывăр тиенĕ поездсем ытларах илсе çÿрессишĕн, топливо нумайрах перекетлессишĕн ăмăртса ĕçлеççĕ. Февраль уйăхĕнче депо коллективĕ 200 тонна яхăн çĕр кăмрăкĕ перекетленĕ. Нумай машинистсем йывăр тиенĕ поездсем çеç илсе çÿреççĕ.

Февралĕн 29-мĕшĕсенче СССР Верховнăй Совет депутачĕ паллă машинист И. Назаров юлташ Çĕмĕрле станцине нумай груз тиенĕ поезда илсе çитерчĕ, нормăна пĕр хут çурă ирттерсе тултарнă, икĕ тонна çĕр кăмрăкĕ перекетленĕ. Ăна ку ĕçре машинист помощникĕ К. Егоров тата кочегар Г. Максимов юлташсем лайăх пулăшса тăнă.

Назаров юлташран пример илсе, Ф. Вакулин машинист, унăн помощникĕ И. Корягин тата кочегар И. Павлов юлташсем сменăра груз турттармалли задание 200 процент тултарнă, 1.932 килограмм топливо перекетленĕ.

Февралĕн 29-мĕшĕпе мартăн 1-мĕшĕ хушшинче Л. Николаев машинист, унăн помощникĕ Н. Таныгин тата Петров кочегар йывăр тиенĕ поезда Çĕмĕрле станцине пĕр сехет маларах илсе çитерчĕ, виçĕ тонна çĕр кăмрăкĕ перекетленĕ.

Депо коллективĕ Хусан чугун çулĕнче чылайранпа малта пырать. 1951 çулхи декабрь уйăхĕнче тата кăçалхи январь уйăхĕнче депона Хусан чугун çул —управленийĕпе Дорпрофсожăн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавне панăччĕ. Февраль уйăхĕнче коллектив тата хастарлăрах ĕçлерĕ. Халĕ, СССР Верховнăй Совечĕн сессийĕ ячĕпе стахановла вахтăна тăнă хыççăн, коллектив çĕнĕрен те çĕнĕ çитĕнÿсем тăвать.

С. СИНИЦЫН,
ВКП(б) Канаш хула комитечĕн секретарĕ.

Промкомбинатра ĕçлекенсен парни

Елчĕк райпромкомбинатĕнче ĕçлекен рабочисемпе служащисем хушшинче социализмлă ăмăрту куллен вăйланса пырать. Комбинат коллективĕ 1952 çулхи тата пĕрремĕш кварталти производство планне ирттерсе тултарма обязательство илнĕ.

Рабочисен ăмăртăвĕ уйрăмах Канашри вагонсем юсакан заводри стахановецсем ĕç тухăçлăхне хăпартма чĕнсе панине сÿтсе явнă хыççăн вăйланса кайрĕ. Рабочисем илнĕ обязательствăсене ăнăçлă пурнăçласа пыраççĕ. Промкомбинат пĕрремĕш кварталти производство планне февралĕн 23-мĕшĕ тĕлне 101 процент пурнăçланă.

А. Гаврилов столяр кварталти ĕç нормине 154 процент, К. Тимофеевпа Н. Карсаков столярсем 130—135-шер процент тултарчĕç.

(Хамăр корр.).

Атăлпа Дон хушшинчи канал валли

Кăçал çуркунне, коммунизмăн аслă стройкисенчен пĕри, Атăлпа Дон хушшинчи суднăсем çÿремелли канал ĕçе кĕрет. Çак канала ĕçе яни ССР Союзĕнчи шыв çулне нумай ÿстерет, Тăван çĕршыв столици Мускав пилĕк тинĕс порчĕ пулса тăрать. Çапла вара çитес навигацирен пуçласа Мускавра пăрахут çине ларса шыв çулĕпе тÿрех Азов тинĕсне, унтан хура Тинĕсе тухма пулать.

Атăлпа Дон хушшинчи канала ĕçе яма хатĕрленнĕ май, çĕнĕ çулпа çÿреме çĕнĕ паротеплоходсем, дебаркадерсем, вокзалсем тăваççĕ, киввисене юсаса лайăхлатаççĕ.

Пассажирсемпе грузсем илсе çÿрес ĕçе лайăхлатас майпа халĕ Атăлпа Кама çинчи тата суднăсем юсамалли ытти бассейнсенче халиччен ĕçленĕ пăрахутсене тĕпренех улăштарса çĕнетеççĕ. Йывăç палубăсем вырăнне пĕтĕмпех тимĕр палубăсем тунă. Пăрахутсен пайĕсем те Цымлянски тинĕсре пулакан штормсене чăтмалла çирĕп тата халиччен хинчен чылай илемлĕрех. Атăлпа Дон хушшинчи канал тăрăх çÿрекен пур суднăсем çинче те тинĕс карапĕсем çинчи пек ятарласа тунă радиостанцисем ĕçлеççĕ. Пассажирсем илсе çÿремелли пăрахутсем çинче пĕр, ик е виç вырăнлă каютăсем пур. Тăваттăмĕш класра çывăха кăна каякансем валли уйрăм вырăнсем пулаççĕ. Унсăр пуçне кашни паротеплоход çинче пассажирсене канма пысăк салонсем, ресторансем, библиотекăсем, хĕрлĕ кĕтессем ĕçлеççĕ. Пăрахут çинчи радиоузелсем судно ăçта çитнине, хăш пристаньре миçе минут тăмаллине пассажирсене пĕлтерсех тăраççĕ.

Халĕ Атăлпа Дон хушшинчи канал тăрăх çÿремелли пăрахутсене çĕнетсе лайăхлатас ĕç вĕçленсе пырать.

Çĕнĕ йышши пăрахутсемпе çĕнĕ маршрут тăрăх çÿреме ăста специалистсем чылай кирлĕ. Çавна шута илсе, СССР Юханшыв флочĕн министерстви Горький хулинче çавăн пек пăрахутсен капитанĕсен, штурманĕсен курсне организациленĕ. Çав курсран çак кунсенче 54 çын вĕренсе тухнă. Курсра Атăлпа Дон хушшинчи канал тăрăх Цымлянски тинĕсре тата Дон тăрăх çÿремелли çĕнĕ çула тĕплĕн вĕреннĕ, çак çулăн фарватерĕпе паллашнă.

Атăлпа Дон хушшинчи канала ĕçе кĕртсен чи вăрăм шыв çулĕ Мускав — Дон çинчи Ростов пулать. Çак çула пăрахутпа 12 кунта тухма пулать. Мускавран тухнă пăрахут малтан Мускав ячĕпе тăракан канал тăрăх Атăла тухать. Кунта вырăссен ватă хулисем—Ярославль, Кострома, Горький, Хусан, Куйбышев, Саратов, Сталинград патĕнчен иртсен, икĕ пысăк шыв хушшинчи канала кĕрет. Дон тăрăх иксĕр километр ытларах кайсан, эсир Ростов портне пырса кĕретĕр.

Иккĕмĕш маршрут — Сталинград — Ростов, виççĕмĕшĕ—Сталинград — Калач пулать.

Дон çинчи Ростовпа Мускав хушшинче çÿрекен çĕнĕ те паха пăрахутсем Шупашкар пристанĕнче те чарăнса тăраççĕ.

Атăлпа Дон хушшинчи канала ĕçе кĕртиччен шутлă кунсем юлчĕç. Çак куна пирĕн çĕршыври кашни ĕççынни чунтан савăнса кĕтет. Çак куна эпир, Атăл тăрăх пăрахутсем илсе çÿрекен капитансем, хавасланса кĕтетпĕр. Çав канал тăрăх пăрахутсем илсе çÿресси пирĕншĕн чи пысăк хисеп те чыс пулĕ. Эпир хамăра шанса панă пысăк ĕçе тивĕçлипе пурнăçлама тăрăшăпăр.

П. СЛЕПЕНКОВ,
Атăлпа Дон хушшинчи канал тăрăх çÿрекен «Советская республика» пăрахут капитанĕ.

Аслă писателĕн вилтăпри çинче пулнă митинг

Ĕнер, мартăн 3-мĕшĕнче, сăмах илемлĕхĕн генилле художникне, литературăри вилĕмсĕр сăнарсене тăвакана, классикла литература корифейĕсенчен пĕрне—Николай Васильевич Гоголе хисеплесе асăнма столицăри ĕççыннисем, наука, литература тата искусство деятелĕсем Ново-Девичье масарĕ çине пухăннă. Вырăссен аслă писателĕн мрамортан тунă бюстне лартнă вилтăпри патĕнче митинг пулнă.

Н. В. Гоголь вилнĕренпе 100 çул тултарнине уявлас енĕпе ĕçлекен Пĕтĕм союзри комитет ячĕпе митинга В. В. Виноградов академик уçнă. Митингра СССР Совет писателĕсен союзĕнчен В. П. Катаев, СССР Наука академийĕнчен А. М. Еголин сăмах каланă. Вĕсем Н. В. Гоголь хăварнă литература пуянлăхĕ совет культуришĕн уйрăмах пысăк вырăн йышăнса тăни, Н. В. Гоголь сутсанталăкпа этеме питĕ чаплă сăнласа кăтартма пĕлнĕ талантлă писатель пулни çинчен каланă.

Вырăссен аслă писателĕн вилтăпри çине чĕрĕ чечексен кăшăлĕсене хунă.

(ТАСС).

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Коммунистсен вĕренĕвне куллен ертсе пымалла

Марксизм-ленинизма харпăр хăй тĕллĕн вĕренекенсен йышĕ пирĕн районта çултан-çул ӳссе пырать. Çĕнĕ вĕренӳ çулĕнче вĕсен йышĕ 292 çынна çитрĕ. Çакă вăл иртнĕ вĕренӳ çулĕнчи хисепрен чылай ытларах.

Харпăр хăй тĕллĕн вĕренекен коммунистсемпе партире тăман кадрсем кашниех уйрăм план тăрăх вĕренеççĕ. Вĕсене пулăшма ВКП(б) райкомĕ теори тĕлĕшĕнчен лайăх хатĕрленнĕ консультантсем уйăрнă.

Иртнĕ çулсенче консультантсем пĕр вăхăтрах политшкул тата кружок руководителĕсем пулса ĕçлетчĕç. Эпир ку йăнăша тӳрлетрĕмĕр, консультантсенчен чылайăшне кружоксене ертсе пырас ĕçрен хăтартăмăр. Ун хыççăн вĕсем харпăр хăй тĕллĕн вĕренекен коммунистсене ытларах пулăшса тăраççĕ. Кашни консультант çумне 8—10 вĕренекен çирĕплетрĕмĕр.

Харпăр хăй тĕллĕн вĕренес ĕçе лайăх йĕркелесси консультантсенчен нумай килет. Коммунистсем мĕнле вĕреннине тĕрĕслесе тăмасан, вĕсене теори тĕлĕшпе пулăшса пымасан, вĕренӳ, паллах, йĕркеллĕ пулса пыраймасть.

Консультантсенчен чылайăшĕ хăйсене шанса панă ĕçе тивĕçлипе туса пыраççĕ. В. Нимаков консультант вунă коммуниста пулăшса тăрать. Вĕренӳ çулĕ пуçламăшĕнчех вăл кашни коммуниста харпăр хăй тĕллĕн вĕренмелли план тума пулăшнă, мĕнле литературăпа тата унпа хăш вăхăтра усă курмалли çинчен каласа ăнлантарнă. Вĕренекенсене вăл час-часах хăй патне чĕнет е вĕсем патне кайса консультацисем парать. Çапла вăл вĕренекен пĕр ăнланман ыйтупа хăй патне пырассине кĕтсе тăмасть. Консультацисенче Нимаков юлташ мĕнле вĕреннипе интересленет, мĕн ăнланманнине çинчен ыйтса пĕлет, пулăшать. Консультант вĕренекене кирлĕ кĕнекене вуласа тухма, лекци итлеме, словарьне, энциклопедипе, справочникпе усă курма сĕнет, конспект çырса пыма вĕрентет.

Нимаков юлташ хăй çумне çирĕплетнĕ вĕренекенсем патне хăçан каймаллине палăртса график тунă. Вăл консультацисем вăхăтĕнче пĕр-пĕр юлташа панă ыйтусене уйрăм журнал çине çырса пырать.

Çакăн пек меслетпе ĕçлени вĕренекенсен пĕлĕвне ӳстерме чылай пулăшрĕ. Г. Ефремов коммунист Маркспа Энгельс çырнă «Коммунистсен партийĕн манифесчĕ» çинчен, В. И. Ленинăн «Мĕн тумалла?» кĕнекинчи тĕп положенисем çинчен тарăннăн, ăнланмалла каласа панă. В. Игнатьев, И. Макаров тата ытти коммунистсем те марксизм-ленинизм произведенийĕсене лайăх пĕлни палăрнă.

Штатра тăман Е. Николаев консультант та (Урнар ялĕ), начар мар ĕçлет. Вăл пилĕк коммуниста тата партире тăман пĕр учителе пулăшса тăрать.

Эпир консультантсемпе çапла ĕçлетпĕр: ВКП(б) райкомĕн парткабинетĕнче вĕсем валли лекцисем, консультацисем пулаççĕ, консультантпа уйрăм каласусем иртереççĕ. Кашни консультант коммунистсем вĕренекен произведенисем тăрăх мĕнле пулăшу памаллипе паллашать, кăтартусем илет. Консультацисемпе каласусемсĕр пуçне, парти райкомĕ консультантсен канашлăвĕсемпе семинарĕсене иртерет. Унта вĕсем пĕр-пĕрин ĕç опычĕпе паллашаççĕ. Ку семинарсенче канашлусем консультантсем тата ВКП(б) райкомĕ пысăк пулăшу параççĕ. Çавăнпа, январĕн 29-мĕшĕнче пулнă канашлăва илер. Унта виçĕ уйăх хушшинче вĕренĕвĕн итогĕсем çинчен тата марксизм-ленинизм произведенийĕсене харпăр хăй тĕллĕн вĕренекен коммунистсем умĕнче тăракан задачăсем çинчен тунă доклада сӳтсе явнă. Канашлура 12 консультант тухса каларĕ, вĕсем хăйсен опычĕпе паллаштарчĕç, харпăр хăй тĕллĕн вĕренекен коммунистсене кирлĕ пек пулăшу паман консультантсене критикăларĕç. Консультантсем çавăн пекех ВКП(б) райкомĕн пропагандăпа агитаци пайне тата парткабинета та тивĕçлипе критикăларĕç, харпăр хăй тĕллĕн вĕренекенсемпе райком çителĕксĕр интересленнине, вĕсем валли марксизм-ленинизм ыйтăвĕсем тăрăх каласусемпе консультацисем сахал иртернине палăртрĕç.

Критикăна шута илсе, парткабинет хăйĕн ĕçне улăштарчĕ. Хальхи вăхăтра лекторсем ялти коммунистсем патне кайса вĕсем валли час-часах консультацисем иртереççĕ. Ку ĕçе ВКП(б) райкомĕ çумĕнчи касхи партшкулта лайăх вĕренсе пыракансене хутшăнтарнă.

Консультантсемпе ĕçленĕ чух вĕсен отчечĕсене ВКП(б) райкомĕн бюровĕнче, пуçламăш парторганизацисен пухăвĕсенче тата парти райкомĕн пропагандăпа агитаци пайĕнче итлени пысăк ырăн йышăнса тăрать. Вĕренӳ çулĕ пуçланнăранпа ВКП(б) райкомĕн бюровĕнче тата парти райкомĕн пропагандăпа агитаци пайĕнче 11 консультант отчетне итленĕ. Юлашки вăхăтра пуçламăш парторганизацисенче те коммунистсем харпăр хăй тĕллĕн вĕреннипе çыхăннă ыйтусене ытларах сӳтсе явма пуçларĕç.

Харпăр хăй тĕллĕн вĕренессине лайăх организацилес ĕçре большевиксен партийĕн историйĕпе теорийĕ çинчен лекцисем вуласси те пысăк ырăн йышăнать.

Çĕнĕ вĕренӳ çулĕнче харпăр хăй тĕллĕн вĕренекен коммунистсене пулăшас майпа, районта 97 лекципе доклад иртернĕ. Парткабинетра та лекцисем час-часах пулаççĕ. Вĕренӳ çулĕн тăватă уйăхĕ хушшинче В. И. Ленинăн «Мĕн тумалла?», «Утăм малалла, икĕ утăм каялла», «Социал-демократин демократилле революцири икĕ тактики», И. В. Сталинăн «Ленинизм никĕсĕсем çинчен», «Ленинизм ыйтăвĕсем пирки» произведенийĕсем çинчен лекцисем вуланă. Çавăн пекех философилле темăсем тăрăх: марксистла диалектикăлла метод çинчен, марксистла философилле материализм çинчен лекцисем пулнă.

Юлашки вăхăтра, харпăр хăй тĕллĕн вĕренекен коммунистсене пулăшас майпа ВКП(б) райкомĕн лекторсен ушкăнĕн вăйĕпе лекцисене пуçламăш парторганизацисенче иртерме пуçларăмăр.

Сăмахран, марксизм-ленинизма харпăр хăй тĕллĕн вĕренекен коммунистсем валли машина-трактор станцийĕнчи парторганизацинче темиçе лекци вуланă. «Большевик» колхозри парторганизацире В. И. Ленин партин VIII-мĕш съездĕнче тунă «Ялта ĕçлесси çинчен» доклад тăрăх тата И. В. Сталинăн «Ленинизм никĕсĕсем çинчен», «Ленинизм ыйтăвĕсем пирки» произведенийĕсем тăрăх лекцисем иртернĕ. Кавалти вăтам шкулти парторганизацире В. И. Ленинăн «Мĕн тумалла?», «Социал-демократин демократилле революцири икĕ тактики» тата И. В. Сталинăн «Пролетарисен класĕпе пролетарисен партийĕ» кĕнекисем тăрăх лекцисем пулнă.

Лекцисем вулас тĕлĕшпе уйрăмах И. Григорьев, М. Антонов, В. Моклаков, Ф. Бочкарев, А. Орлов, Е. Поликарпова лекторсем активлă ĕçлеççĕ.

Лекцисен пахалăхне лайăхлатас майпа эпир хатĕр лекцисене ВКП(б) райкомĕн лекторсен ушкăнĕн канашлăвĕсенче пăхса тухатпăр, тепĕр чухне вĕсене парти райкомĕн штатра тăман лекторсен ушкăнĕн руководителĕ пăхса тухать. Канашлусенче лекторсем лайăх сĕнӳсем параççĕ, лекцисен пахалăхне лайăхлатма пулăшаççĕ.

Марксизм-ленинизма харпăр хăй тĕллĕн вĕренес ĕçре пирĕн пысăк ситменлĕхсем те пур-ха. Хăшпĕр вĕренекенсем, сăмахран, Г. Антонов (Урнар), Н. Муллин (Энĕшпуç), В. Васильев, З. Иванова (Кипĕ Шулхан) юлташсем ку вăхăтчен те вĕренме тытăнман.

Вĕренӳ çулĕ вĕçлениччен тăватă уйăх та юлмарĕ. Пирĕн лайăх ĕçлекен консультантсемпе лекторсен опытне куллен сарса пырса, марксизм-ленинизма харпăр хăй тĕллĕн вĕренес ĕçри ситменлĕхсене хăвăртрах пĕтерме тăрăшас пулать.

И. СЕРГЕЕВ,
ВКП(б) Вăрмар райкомĕн секретарĕ.

Ĕçсыннисен ыйтăвĕсене тивĕçтересси— чыслă та ответлă ĕç

Етĕрне хули чылай пысăкланчĕ тата илемленчĕ. Унта промышленность предприятийĕсем, культурăпа çутĕç тата медицина учрежденийĕсем, т. ыт. пур. Юлашки çулсенче ĕçсыннисен пурнăçпа йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерес тĕлĕшпе чылай ĕçсем туса иртернĕ: çĕнĕ чайнăй, культура таварĕсем сутакан магазин уçнă. Пурăнмалли çуртсем, çăлсем, кĕперсем тăвас ĕç çултан-çул ӳссе пырать.

Пĕр-ик çул каярах инвалидсем валли çĕнĕ çурт лартнă. Машина-трактор станцийĕ чулран пысăк мастерской лартрĕ. Кивĕ, йывăçран тунă мунча вырăнне чултан лайăх мунча лартнă, больницăра рентген кабинечĕ уçнă. Государство хулана çĕнетсе лайăхлатма çулсерен укçатенкĕ нумай уйăрса парать. Халăха куллен кирлĕ таварсем туса кăларасси аталанать. Хула витĕр хĕлĕн-çăвĕн Шупашкара тата Горький хулине автомашинăсем çӳреççĕ.

Хулари ĕçсыннисен пурнăçпа йăла ыйтăвĕсене лайăх тивĕçтерме майсем пулса тăчĕç. Анчах хăшпĕр хуçалăх руководителĕсем çак ĕçе пысăка хурса хакламаççĕ, куллен кирлĕ таварсем туса кăларассине ӳстермелли майсемпе туллин усă курмаççĕ.

1. Промкомбинатра

Комбинат директорĕ А. Антонов юлташ кулленхи ĕçсем çинчен кăмăллах калаçмасть.

— Ĕçлетпĕр-ха та, кăлтăксăрах мар,— тет.

Комбинат пысăк çуртра вырнаçнă, унăн электростанци, автомашинăсем пур, ĕç вăйĕ çителĕклĕ. Заказсем паракан нумай. Комбинат ĕçсыннисемпе учрежденисен ыйтăвĕсене çителĕксĕр тивĕçтерет.

Заказсене вăхăтра пурнăçламаççĕ. Çĕвĕ çĕлекен цехра заказсем темиçешер уйăх выртаççĕ. Хулари пожарной депора ĕçлекен В. Гордеев юлташ иртнĕ çулхи октябрь уйăхĕнче пиншак çĕлеме панă. Вăхăтра çĕлесе паманшăн цех заведующийĕ М. Заболотнов юлташ пăшăрханмасть.

— Малтан мастер ерçмерĕ, унтан ăшне хумалли материал пулмарĕ,— тет лăпкăн.

Киров ячĕпе тăракан колхоз бригадирĕн Скрепков юлташăн хром тумтирĕ те виççĕмĕш уйăх выртать. Хромне вăл хăй панă.

— Мĕншĕн вăхăтра çĕлеместĕр?

— Вăхăтра ăшне хумалли материал пулмарĕ, халĕ ăна хăй илсе килчĕ. Çĕлетпĕр ĕнтĕ...

Кун пек тĕслĕхсем сахал мар. Чылай чухне тумтир çийĕлĕхне заказчик хăй илсе пырать. Ытти материалсене хăйсем хурса пама шантараççĕ, анчах пурнăçламаççĕ. Тепĕр чухне тӳме, çип тата ытти çавăн пек вак-тĕвек япаласем пулманни ĕçе чăрмантарать.

Столярнăй цех. Унта кашнинех мĕн те пулсан тума тăрăшать. Ĕç вăхăтĕнче камăн ахаль ларас килтĕр-ха? Акă пĕри вут пуленкине татрĕ те кĕпе çумалли лаптак тукмак тума тытăнчĕ.

— Çакна та ыйтаççĕ, хуçалăхра мĕн кăна кирлĕ мар-ши,—тет цех заведующийĕ Н. Сапожников юлташ.—Вăл кăна-и? Шкулсем—партăсем, уйрăм çынсем—сĕтел-пукансем, учрежденисем — шкафсем туса пама ыйтаççĕ. Анчах тăваймастпăр ĕт, материал çук,— тет вăл.

Етĕрнере ялхуçалăх механизаторĕсен шкулне уçнă. Ку шкул промкомбината партăсене тенкелесем тума заказ панă мĕн. Вăл заказа пурнăçламан.

Столярнăй мастерской чылай чухне япаласене пахалăх тĕлĕшĕнчен начар туса парать. Хулари хăшпĕр шкулсене тата культура çуртне чĕрĕ йывăçран туса панă пукан-тенкелсем хăвăрт ванчĕ. Мастерской валли йывăç материалсем вăхăтра хатĕрлесе тиеймеççĕ. Çав сăлтавпах катка-пичке тăвакан мастерской та ĕçлеме чарăннă. Иртнĕ çулта хатĕрленĕ йывăçа вăхăтра турттарса кăлармасăр делянка çине хăварнă. Çавăн пекех 150 кубометр вутă вăрмана юлнă.

— Дирекци çаврăнăçусăрлăхĕнчен килчĕ вăл, çулла автомашинăсем ахаль ларчĕç,— теççĕ рабочисем.

2. Промартельте

Сталин ячĕпе тăракан промартелĕн çĕвĕ çĕлекен мастерскойне спирт заводĕнче ĕçлекен А. Тарасова юлташ пустав пальто çĕклесе пычĕ.

— Пăшăрханмалла пулчĕ вĕт-ха,— терĕ вăл.

— Тем ĕнтĕ тата?

— Пальто юрăхлă пулмарĕ, хулпуççисем вырнаçуллă мар.

— Тăхăнса пăхăр-ха эппин. Мĕнле асăрхаман-ха кăна,— хăй те пăшăрханнă пек пулать мастерской заведующийĕ Ф. Щетинин юлташ.—Юсасă парас пулать.

Сорокин юлташ костюм тăвăр çĕлесе панă пирки пăшăрханать. Пиншакĕ аранаран хирĕ-хирĕç хупланать.

— Мĕн тăвас тен, хул-çурăм пурин те пĕр пек мар. Кашнин çинех вырнаçуллă тума çук. Пулаççех ĕнтĕ кăлтăксем те,— айăпа хăйĕнчен сирме хăтланать В. Абрамов мастер.

Кунта аван мастерсем ĕçлеççĕ, тăрăшсан, яланах кăлтăксăр çĕлеме пултараççĕ вĕсем.

— Хайхи военнăй каллех çитрĕ,— терĕ Щетинин юлташ, мастерской патне пĕри лашапа пырса тăннине кантăкран курса.

— Китель пирки пулĕ-ха вăл. Хатĕр мар-ха,— сăмах хушрĕ Абрамов юлташ.

Ку юлташ виçĕ хутчен çитрĕ, çанах кительне илмесĕрех кайрĕ. Çĕлемен ăна.

Кунта та, промкомбинатри пекех, ĕçсыннисен ыйтăвĕсене тивĕçтерсе пыраймаççĕ.

Промкомбинатра Сталин ячĕпе тăракан промартельте сехет, велосипед, çĕвĕ çĕлемелли тата пичетлемелли машинăсем, музыка инструменчĕсемпе патефонсем юсамалли мастерскойсем çук. Ун пек мастерскойсене хулипе те тупаймастăн.

Хуларан икĕ километрта спирт тата çу завочĕсем пур. Унта парикмахерски çук. Çавăнпа та рабочисен хулари парикмахерскине çӳреме тивет. Парикмахерски хулипе те пĕрре кăна.

* * *

Етĕрне хулинче ĕçсыннисен ыйтăвĕсене кирлĕ пек тивĕçтерсе пыма майсем çителĕклĕ, вырăнти промышленность предприяти руководителĕсем пĕтĕм ответлăхпа тăрăшса ĕçлени кăна çитмест.

Ĕçсыннисен ыйтăвĕсене тивĕçтерес енĕпе райсовет исполкомĕ хăйĕн пуçарулăхĕне ответлăхне чылай ӳстерме, вырăнти промышленность предприятийĕсене ертсе пырассине аванлатма тивĕçлĕ.

«Чăваш Коммуни» хаçат бригади:
А. ЧЕХОНИН, Г. МЫТИКОВ, Н. ПУШКИН.

Машинăсен паркĕ ӳсрĕ

ИШЛЕЙ. МТС-ăн машинăсен паркĕ çулсерен ӳссе пырать. Иртнĕ çулта кунта 40 трактор, 8 комбайн, 10 молотилка т. ыт. машинăсем вуншар пулнă пулсан, кăçал çĕнĕрен тата 13 трактор, 3 самоходнăй комбайн, 1 молотилка илсе килмелле. Çав шутран юлашки вăхăтра 4 трактор, 2 комбайн, 10 культиватор тата тепĕр автоцистерна илсе килнĕ.

Комсомолецсем колхоза тĕреклетме тăрăшаççĕ

Пирĕн колхозри пуçламăш парторганизаци комсомолецсенчен агитаторсем пулса ĕçлеме 6 çынна çирĕплетрĕ. Агитаторсемпе ытти комсомолецсем ялти çамрăксем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе анлă туса пыма тăрăшаççĕ.

Комсомолец-агитаторсем бригадăсенчи колхозниксем хушшинче докладсемпе каласусем иртереççĕ, çамрăк колхозниксене производство ĕçĕнче çĕнĕ ӳсĕмсем тума хавхалантараççĕ.

ВЛКСМ комитечĕ пуçарнипе, колхозри комсомолецсем çамрăксен касĕсене ятарласа иртерес ĕçе йĕркеленĕ. Иртнĕ çулта колхозра кун пек касссем ултă иртернĕ. Вĕсенче кашнинчех çамрăксене политикăллă темăсем тăрăх докладсемпе лекцисем туса паратпăр.

ВЛКСМ комитечĕ комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксен пĕрлехи пухăвĕсене иртерет. Ун пек пухусенче çамрăксен колхоз производствинчи активлăхне ӳстерес, культурăллă-массăллă ĕçе вăйлатас, комсомолецсен политикăллă тата пĕтĕмĕшле пĕлĕвĕпе культурăллă шайне ӳстерес ыйтусене сӳтсе яватпăр.

ВЛКСМ комитечĕ çамрăксен пухăвĕсен решенийĕсене пурнăçлама мĕнпур вăя мобилизацилет. Кăна нумай тĕслĕхсемпе çирĕплетсе пама пулать.

Малтанлăха пирĕн комсомол организацийĕ колхозри çамрăксен пĕчĕк пайне кăна пĕрлештерсе тăратчĕ. ВЛКСМ комитечĕ сахал мар вăй хурса ĕçлерĕ. Ку ыйтăва комсомолецсен пĕрлехи пухăвĕнче ятарласа сӳтсе яврăмăр, çамрăксем хушшинче политикăллă тата ăнлантару ĕçне вăйлатса пытăмăр. ВЛКСМ комитечĕн членĕсем, политика тĕлĕшĕнчен ытларах пĕлӳ илнĕ комсомолецсем колхозри çамрăксене ВЛКСМ уставĕпе тĕплĕ паллаштарчĕç, ленинла комсомолăн парти политикине пурнăçлас ĕçри ролĕ çинчен ăнлантарса пачĕç.

Комсомол организацийĕн ялти ĕçсыннисемпе çамрăксем хушшинчи авторитечĕпе влиянийĕ ӳссе пынине курса, çамрăксен ленинла-сталинла комсомол ретне кĕрес туйăмĕ пысăкланчĕ. Халĕ пирĕн колхозра ВЛКСМ ретне кĕме çул çитнĕ çамрăксем пурте ВЛКСМ ретĕнче тăраççĕ.

Çапла вара, колхозри комсомол организацийĕ 60 çамрăк колхозникпа колхозницăна пĕрлештерсе тăрать.

Пуçламăш парторганизаци ертсе пынипе, эпир колхоза организаципе хуçалăх тĕлĕшĕнчен тĕреклетес, производствăра çитĕнӳсем тăвас тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлетпĕр. Комсомол организацийĕ политикăллă-хуçалăхлă задачăсене пурнăçлас ĕçе яланах активлă хутшăнать.

Малтанхи тапхăрта пирĕн колхоз вăрман хатĕрлев планне тултарас енĕпе юлса пыратчĕ. Парторганизаци сĕннипе, эпир вăрман касса турттарма 36 комсомолеца уйăртăмăр. Комсомолецсем, пĕрпĕринпе социализмла ăмăртса ĕçлесе, хăйсем çине хунă шанăça тивĕçлипе тӳрре кăларма тăрăшаççĕ. Колхоз вăрман хатĕрлев планне январь уйăхĕнче тултарчĕ. Каснă йывăçа çул хĕррине турттармалли задание те тултарнă. Халĕ çамрăксем, ытти колхозниксемпе пĕрле, вăрман турттармалли плана пĕтĕмпех тултарассишĕн кĕрешеççĕ.

Вăйлă тырпулшăн пыракан кĕрешӳĕн ăнăçлăхне пуринчен малтан çуракине лайăх хатĕрленесси кĕтсе илни татса парать. Комсомолецсем çакна аван ăнланаççĕ. ВЛКСМ комитечĕ кăçалхи çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе çамрăксен икĕ воскресникне иртерчĕ. Çамрăксем уй-хире 500 лава яхăн тислĕк кăларчĕç, 70 центнера яхăн кайăк-кĕшĕк тислĕкĕпе кĕл пухрĕç, 200 гектар çине юр тытса хăварчĕç. А. Тимофеева комсомолка ертсе пыракан çамрăксен бригади 1.000 центнера яхăн вăрлăх сортласа хучĕ.

Артель членĕсем С. Ефимов комсомолеца тимĕрçĕ ĕçне шанса панă. Комсомолецсен пухăвĕ ăна ялхуçалăх машинисене хăвăртрах юсаса пĕтерме сĕнӳ пачĕ. Хастарлă комсомолец колхозниксен шанăçне чăннипех тӳрре кăларать. Вăл хăйĕн юлташĕпе пĕрле куллен тăрăшса ĕçлесе, колхозри мĕнпур плугсемпе сеялкăсене юсаса лартрĕ. Колхоз правленийĕ çамрăк тимĕрçĕ ĕçне лайăх хак парса йышăнчĕ. Çамрăксем хастарлă ĕçлени çинчен калакан тĕслĕхсем пирĕн колхозра сахал мар.

Комсомолецсен производствăри активлăхне ӳстерес ĕçре комсомол групписем туса йĕркелени пысăк пулăшу парать. Пĕр уй-хир бригадинче тата виçĕ фермăра комсомол групписем тунă. Вĕсене ертсе пыма чи пултаруллă комсомолецсене уйăрса лартнă. Группоргсем комсомолецсене уйăхра икшер хут пухса калаçаççĕ, умра тăракан задачăсене пурнăçламалли майсене палăртаççĕ. ВЛКСМ комитечĕн членĕсем комсомол групписен ĕçне куллен тĕрĕслесе тăраççĕ, умра тăракан задачăсене пурнăçлама пулăшаççĕ.

Çамрăксене пурне те политикăллă вĕрентĕве хутшăнтарнă. Комсомолецсем вĕренӳре лайăх ĕлкĕрсе пыраççĕ.

И. НАУМОВ,
Елчĕк районĕнчи «Вперед» колхозри ВЛКСМ комитечĕн секретарĕ.

Инженер-технолог

Эпир унпа тĕл пулса калаçас тесе, малтанах вагонсем пуçтаракан цех начальникĕ патне кĕтĕмĕр Иван Сергеевич Барамышников пире пневматически мăлатуксем пулеметран пенĕ пек такăлтатса шавлакан цеха илсе кайрĕ. Ĕç вĕрет. Хăта пăхнă, унта спецовка тăхăннă рабочисем ĕçлеççĕ. Пĕр кĕтесре электросварка çути çиçĕм пек куçа шăратса йăлтăртатать. Цех тăрринче вагон ураписене йăтнă йывăр крансем шăваççĕ.

Цех стени çумĕнче, никама кансĕрлемелле мар, анчах пурне те лайăх курăнмалли вырăнта, сап-сарă çӳçлĕ, кăштах тăрăхларах питлĕ, вăтам та тăп-тăпăл пӳ-силлĕ, илемлĕ хĕр тăрать. Ун патĕнче тата икĕ çын пур, вĕсенчен пĕри, нормировщик, аллинчи хронометр çине пăха-пăха илсе, темĕн çыркалать.

— Вĕсем вагон çумне автотормоз çыпăçтаракансен ĕçпе тĕпчесе сăнаççĕ,— пĕлтерчĕ пире цех начальникĕ.

Кун пек чухне çынна чăрмантарма юрамасть. Çавăнпа эпир вĕсем патне ĕç пĕтерсен тин пытăмăр.

— Алина Петровна! Сирĕн пата хăнасем килчĕç,—терĕ Барамышников.—Паллашăр.

Эпир Сурганова инженер-технологпа паллаштăмăр, хамăр мĕн ĕçпе килнине каласа патăмăр. Вăл кăштах хĕрелнĕ пек пулчĕ те, пирĕнтен касару ыйтса, рабочипе каласма пуçларĕ.

— Эсир мĕн ĕçпе килнĕччĕ, Федор Павлович?

— Эпĕ, леш, хăй, хамăн шухăш пиркиччĕ. Акă, инструменчĕ. Чертеж туса пăхрăм. Темле пулчĕ. Сирĕнтен пулăшу ыйтатăп.

Федор Шашков, заводри паллă рационализатор, Сурганова юлташ патне кирлĕ ĕçпе пынă.

Кивĕ вагонсене салатнă чухне, вĕсен заклепкисене халиччен иккĕн мăлатукпа çапса кăларнă. Вĕсене кăларма йывăр тата вăхăт нумай кирлĕ. Шашков рационализатор халĕ çав заклепкăсене кăлармалли çĕнĕ май тупнă. Ун ĕçĕпе инженер-технолог Сурганова çийĕнчех интересленчĕ, рационализатор тунă инструмента тытса пăхрĕ, чертежне тĕплĕн тишкерсе тухрĕ.

— Федор Павлович, эсир хăвăр инструментпа ĕçлесе пăхрăр-и?—ыйтрĕ вара васкаса.

— Пăхрăмăр.

— Вара мĕнле?

— Лайăх пек.

— Ну, атьăр-ха эппин, ушкăнпе пырса пăхăпăр.

Рационализаторăн çĕнĕ инструменчĕпе мĕнле ĕçленине Сурганова питĕ тимлĕ сăнарĕ.

— Саламлатăп сана, Федор Павлович!—алă пырса тытрĕ вăл.—Питĕ аван. Кун пек майпа заклепкăна пĕр çынах, çăмăллăнах кăларма пултарать. Халиччен эпир иккĕмĕш потокра уттăн ĕçленĕ пулсан, халĕ тăваттăнах ĕлкĕрме пултаратпăр. Сан сĕнĕве ыранах бюрора пăхса тухăпăр. Чертежсене аванах тăвайман та, ну юрĕ, ĕç унта мар. Ăна эпĕ хам та туса парăп.

Çавăнса кайнă рационализатор инженер-технолога чунтан-чĕререн тав турĕ.

— Вăт мĕнле вăл пирĕн Алина Петровна? Кунтăр-и халь?—пирĕн еннелле пăхса пуçне ывăтрĕ цех начальникĕ.— Пур ĕçе те пултарать. Пĕр сăмахпа каласан, ылтăн хĕр!..

* * *

Алина Петровна Сурганова çамрăк-ха. Вăл 1921 çулта Белоруссинче çуралнă. Унăн ашшĕ паравуссен деповĕнче слесарь пулса ĕçленĕ, амăшĕ бухгалтер пулнă.

1939 çулта, хăйсем Украинăра, Горловка хулинче пурăннă чухне, Алина Петровна Сталинăри индустриальнăй ин-

ститута вĕренме кĕрет. Анчах вăл унтан вĕренсе тухаймасть. Этем тивĕçлĕхне çухатнă Гитлер пирĕн çĕршыв çине вăрăхурахла тапăнса кĕнине пула, Алина Петровна çемйипе пĕрле, эвакуаци йĕркипе Вăтам Азие куçса каять.

Йывăр вăхăтсенче те Алина Петровна хăйĕн çуламлă ĕмĕчĕсене çухатмен.

— Вĕренесчĕ. Тăван çĕршывшăн усăллă çын пуласчĕ. Сталинла Конституци пире хĕрарăмсене те; арçынсемпе танах, вĕренме те, ĕçлеме те аслă правăсем панă. Пирĕн çул—ирĕклĕ. Хамăр тăрăшни çеç кирлĕ,—тенĕ вăл.

Пирĕн çĕршывра аслă ĕмĕтсем яланах пурнăçа кĕреççĕ. Совет влаçĕ хăрушă вăрçă вăхăтĕнче те çамрăксене вĕренме майсем туса пачĕ. 1943 çулта Алина Петровна вăрçă вăхăтĕнче Новосибирск хулине куçса пынă Днепропетровскри чугун çул транспорчĕн институтне вĕренме кĕрет. Яланах тăрăшса вĕреннипе пула, вăл 1946 çулта унтан отличнăй паллăсемпе вĕренсе тухать. Вара ăна Канашри вагонсем юсакан завода ĕçлеме яраççĕ.

* * *

Пĕррехинче ирхине вагонсем сăрлакан рабочисем ăна аякранах кăшкăрса, чĕнсе илнĕ.

— Алина Петровна! Килĕр-ха!—пĕрпĕринчен ăмăртмалла шавланă рабочисем.

— Мĕн пулнă-ши ĕнтĕ?—чĕри теме сиссе хăвăрттăн тапма пуçланă унăн.

Рабочисем ăна савăнăçлăн кĕтсе илнĕ.

— Тавтапуç, Алина Петровна! Пултаратăн эсĕ!—кĕç-вĕç «урра» çĕклесшĕн пулнă пек шавланă вĕсем.

Алина Петровна вĕсемпе мĕн пулнине хăй те çийĕнчех ăнланса илеймен.

— Паян мĕншĕн эсир питĕ савăнăçлă капла?—йĕри-тавралла пăхса ыйтнă вăл.

— Мĕнле савăнас мар вара,—умнех пырса тăнă пĕр ватăрах сăрлă рабочи. Вăл Алина Петровна çине ăшă куçпа йăвашшăн пăхнă. Çамрăк-ха эсĕ, анчах сан пек çынсем ытларах пуласчĕ пирĕн заводра...

— Эпĕ нимĕн те туман-çке, Сергей Кузьмич.

— Мĕнле туман?—тин çеç сăрласа пĕтернĕ вагон çинелле тĕллесе кăтартнă ăна Сергей Кузьмич.—Куратăр-и, вагона мĕнле тикĕс сăрланă.

— Куратăп.

— Тата мĕн? Сан тивĕçлĕх мар-и вăл? Кун пеккине эпĕ пуçласа куратăп. Пĕр вагона сăрласа пĕтерне хыççăн тата вунă килограмм сăрă ытлашши юлчĕ вĕт!

— Майăн вуннăпĕр килограмм!

— Эпĕ вуникĕ килограмм перекетлерĕм!—вĕсене чăрсах кăшкăрчĕç ытти рабочисем.

Халĕ ĕнтĕ Алина Петровна сăмах мĕн çинчен пынине тинех ăнланчĕ. Нумаях пулмасть Барамышников патĕнче вагонсене сăрламалли краскопульт аппарат çинчен хĕрӳллĕ калаçу пулса иртнĕччĕ.

— Каллех сăрă ытлашши расходланă. Вагонсем пĕр тикĕс сăрланман. Кунсăр пуçне, сăрă усăсăр сирпĕнсе пĕтнипе, рабочисем пурте палласа илмелле мар вараланнă. Мĕн тумалла ку краскопультпа?—антăранă цех начальникĕн заместителĕ Левин юлташ.

— Шутлас пулать. Капла ниепле те май килмест. Мĕн те пулин тăвасах пулать,—тенĕ Барамышников, шухăша кайса.

— Алина Петровнăна хушас мар-и, Иван Сергеевич? Вăл ун пеккине пултараканччĕ,—пăртакран сĕнӳ панă Левин.

— Эпĕ те çапла шутлатăп,—тенĕ цех начальникĕ.—Тытăнса пăх-ха, Алина?

Алина Петровна краскопульта лайăхлатасси çинчен хăй тахçантанпах шухăшланă.

— Юрать, тытăнса пăхăп,—тенĕ вăл кăшт тăрсан.

Халĕ ĕнтĕ Алина Петровнăшăн çав ĕç мĕнле пулни пĕтĕмĕшпех паллă пулчĕ. Унăн ĕçне рабочисем практикăра тĕрĕсленĕ.

— Капла пирĕн кашни уйăхра пилĕк тонна çурă сăрă перекетлесе юлать тата вагонсем сăрлакансенчен сакăр çынна урăх ĕçе куçаратпăр,—хăй те пĕтĕм чунтан савăнса кайнă çамрăк инженер-технолог.

Алина Петровнăн пархатарлă, мухтавлă ĕçĕсем татах та нумай.

Пĕр вăхăтра рабочисем вагон алăкĕсене час вырнаçтарайманнипе аптăраçă, вăхăт нумай сая кайнă, рабочисем хăйсен ĕç нормисене тултарайман. Çакăн çинчен вĕсем часах Алина Петровнăна каласа панă.

— Тĕрĕслесе пăхăпăр,—тенĕ вăл. Вара савăнтах вагон алăкĕсене виçе-виçе пăхнă.

Вагон алăкĕн кĕтессисенчи тимĕрсене тимĕрçĕ цехĕнче тăваççĕ, вĕсене механически цехра шăрăтаççĕ. Анчах вĕсем кирлĕ виçерен пысăкрах пулнă. Çавăнпа Алина Петровна тимĕрçĕсен цехĕпе механически цеха çав тимĕрсене касмалли çĕнĕ чертеж туса парать. Çавăн хыççăн вагон алăкĕсем çăмăллăнах кĕрсе ларакан пулнă. Ĕç тухăçлăхĕ темиçе хут ӳснĕ, рабочисем хăйсен нормисене иртерсе тултарма тытăннă. Çапла ĕнтĕ çамрăк инженер-технолог ытти цехсенчи ситменлĕхсене те çийĕнчех пĕтерсе, ĕçе хăвăртлатса пыма пулăшать. Çавăнпа ăна заводра пурте пĕлеççĕ, пурте юратаççĕ. Кирек мĕнле йывăрлăхсем килсе тухсан та рабочисем яланах ун патне ăс ыйтма пыраççĕ.

Алина Петровна—активлă общественница. Вăл—цехри «Вагонник» стена хаçачĕн редакторĕ, профсоюз организацийĕн заводри тата цехри комитечĕсен членĕ. Вăл пĕрмаях вĕренет, çĕннине хăвăртрах производствăра сарма тăрăшать. Рабочисене стахановла меслетсене вĕрентсе, ĕç тухăçлăхĕсене ӳстересе пыма пулăшать.

П. ЩИПЦОВ,
С. АСЛАН.
Канашри вагонсем юсакан завод.

Нимӗҫсен фашистла захватчикӗсем поляксен тыткӑна лекнӗ офицерӗсене Катынь вӑрманӗнче персе вӗлернине тӗпчесе пӗлме Ятарласа тунӑ Комисси ПӖЛТЕРНИ*)

Нимӗҫсен фашистла захватчикӗсен тата вӗсемпе пӗр каварлисен тискер ӗҫӗсене тӗпчесе пӗлме тунӑ Чрезвычайнӑй Государственнӑй Комисси йышӑннӑ тӑрӑх, нимӗҫсен фашистла захватчикӗсем поляксен тыткӑна лекнӗ офицерӗсене Катынь вӑрманӗнче (Смоленск сывӑхӗнче) персе вӗлернине тӗпчесе пӗлме ятарласа комисси тунӑ. Комисси составӗнче: Чрезвычайнӑй Государственнӑй Комисси членӗ академик **Н. Н. Бурденко** (комисси председателӗ), Чрезвычайнӑй Государственнӑй Комисси членӗ академик Алексей **Толстой**, Чрезвычайнӑй Государственнӑй Комисси членӗ митрополит **Николай**, Пӗтӗм тӗнчери славянсен комитечӗн председателӗ генерал-лейтенант **А. С. Гундоров**; Хӗрлӗ Хӗрес тата Хӗрлӗ Ҫурҫӑлӑх обществи союзӗн исполком председателӗ **С. А. Колесников**, РСФСР Ҫутӗҫ Халӑх Комиссарӗ Академик **В. П. Потемкин**, Хӗрлӗ Ҫарӑн Санитари тӗп управленийӗн начальникӗ генерал-полковник **Е. И. Смирнов**, Смоленск облисполкомӗн председателӗ **Р. Е. Мельников**.

Комисси хӑй умне лартнӑ задачӑна пурнӑҫлама хӑйӗн ӗҫне судпа медицина эксперчӗсене ҫаксене хутшӑнтарнӑ: СССР Сывлӑх Халӑх Комиссариачӗн судпа медицинӑн главнӑй эксперчӗ, суд медицинин наукӑпа ӑслӑлӑх институчӗн директорӗ **В. И. Прозоровский**, Мускаври иккӗмӗш медицина институчӗн суд медицини кафедрин заведующийӗ, медицина наукисен докторӗ **В. М. Смольянинов**, СССР Сывлӑх Халӑх Комиссариачӗн суд медицинин наукӑпа тӗпчев институчӗн аслӑ научнӑй сотрудникӗ **П. С. Семеновский**; СССР Сывлӑх Халӑх Комиссариачӗн суд медицинин наукӑпа тӗпчев институчӗн аслӑ научнӑй сотрудникӗ доцент **М. Д. Швайкова**; фронтӑн главнӑй патологӗ, медицина службин майорӗ профессор **Д. Н. Выропаев**.

Ятарласа тунӑ комисси аллинче Чрезвычайнӑй Государственнӑй Комисси членӗ академик **Н. Н. Бурденко**, унӑн сотрудникӗсем тата судпа медицина эксперчӗсем тӗпчесе тухнӑ материалсем нумай пулнӑ, вӗсем Смоленск хулине 1943 ҫулхи сентябрӗн 6-мӗшӗнче, ӑна ирӗке кӑларнӑ хыҫҫӑнах, пынӑ та нимӗҫсем тунӑ мӗнпур тискер ӗҫсем мӗнле майпа пулса иртнине ҫийӗнчех тӗпчесе пӗлнӗ.

Ятарласа тунӑ комисси вырӑнта тӗрӗслене хыҫҫӑн ҫакна палӑртнӑ: Смоленск хулинчен 15-мӗш километрта (Витебск шосси тӑрӑх) Катынь вӑрман районӗнче, ӑна «Козьи Горы» теҫҫӗ, Днепр еннелле каймалли шоссе ҫулӗнчен 200 метр кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнерехре нимӗҫ оккупанчӗсем тыткӑна лекнӗ поляксене персе вӗлерсе хыҫҫӑн пытарнӑ виле шӑтӑкӗсем пур.

Ятарласа тунӑ комисси хушнипе, ятарласа тунӑ комиссин мӗнпур членӗсем тата судпа медицина эксперчӗсем умӗнче ҫак виле шӑтӑкӗсене чавса пӑхнӑ. Виле шӑтӑкӗсенче ҫар тумтирне тӑхӑннӑ поляксен виллисен пысӑк пайне тупнӑ. Судпа медицина эксперчӗсем шутланӑ тӑрӑх, вилесен пӗтӗм хисепӗ 11.000 ҫынна ҫитет. Судпа медицина эксперчӗсем ҫӗр айӗнчен чавса кӑларнӑ вилесене тата виле шӑтӑкӗсенчен чавса кӑларнӑ ҫар ҫыннисем ҫумӗнчи документсемпе ытти япаласене питех те тӗплӗн тӗпчесе пӗлнӗ.

Виле шӑтӑкӗсене чавса пӑхнипе тата вилесене тӗпченипе пӗр вӑхӑтрах, ятарласа тунӑ комисси ҫав вырӑнта пурӑнакан ҫынсенчен нумай ыйтса пӗлнӗ. Вӗсем кӑтартса панӑ тӑрӑх, нимӗҫ оккупанчӗсем ҫав преступленисене хӑш вӑхӑтра тата мӗнле майпа тунине тӗрӗссӗн палӑртнӑ.

Свидетельсем каласа панинчен ҫакӑ курӑнать:

«Юзеф тата Софья **Лоен**. Замостье хули, Огороднӑй урам, 25-мӗш ҫурт».

Нимӗҫсем пичетлесе кӑларнӑ 3.796 номерлӗ списокра Юзеф **Лоен**, лейтенант, 1940 ҫулхи ҫуркунне Катынь вӑрманӗнче «Козьи Горы» текен вырӑнта персе пӑрахнӑ, тесе шутланать.

Ҫапла ӗнтӗ, нимӗҫсем пӗлтернинчен ҫавӑ килсе тухать: Юзеф **Лоена** свидетельница **Сашнева** куриччен пӗр ҫулталанӑк маларах персе пӑрахнӑ пулать.

Свидетель **Н. В. Даниленков**, Катынь ял Советӗнчи «Красная Заря» колхозри хресчен ҫапла каласа панӑ:

«1941 ҫулхи август-сентябрь уйӑхӗсенче, нимӗҫсем килсе тухсан, эпӗ ҫул ҫинче поляксем 15—20 ҫынлӑ ушкӑнпа ӗҫленине курнӑ».

Ытти свидетельсем те: **Солдатенков**—Борок ялӗнче староста пулнӑскер, **А. С. Колачев**—Смоленск хулинчи врач, **А. П. Оглоблин** — священник, **Т. И. Сергеев** — ҫул-йӗр мастерӗ, **П. А. Смирягин**—инженер, **А. М. Московская**—Смоленскра пурӑнаканскер, **А. М. Алексеев** — Борок ялӗнчи колхоз председателӗ, **И. В. Куцев**—водопровод техникӗ, **В. П. Городецкий**—священник, **А. Т. Базекина**—бухгалтер, **Е. Н. Ветрова** — учительница, **И. В. Савватеев** — Гнездово станцинчи дежурнӑй т. ыт. те ҫавӑн пекех кӑтартса панӑ.

Катынь вӑрманӗ

Катынь вӑрманӗ тахҫантанпах Смоленск ҫыннисен питех те юратнӑ вырӑнӗ пулнӑ, уяв вӑхӑтӗнчи канӑва вӗсем ялан тенӗ пекех ҫакӑнта ирттернӗ. Сывӑхра пурӑнакан халӑхсем Катынь вӑрманӗнче кӗтӳ ҫӳретнӗ тата хӑйсем валли вутӑ шанкӑ хатӗрленӗ. Катынь вӑрманне пыма нихҫан та чарса тӑни пулман.

Ҫакӑн пек йӗрке Катынь вӑрманӗнче вӑрҫӑ пуҫланиччченех ҫапла пулнӑ. 1941 ҫулхи ҫула ҫак вӑрманта Промстрахкассӑн пионер лагерӗ пулнӑ, ӑна 1941 ҫулхи июль уйӑхӗнче кӑна хупнӑ.

Нимӗҫ оккупанчӗсем Смоленск хулине тытса илсен, Катынь вӑрманӗнче пачах урӑх режим туса хунӑ. Вӑрмана вӑйлӑ патрульсем сыхлама пуҫланӑ; чылай вырӑнсенче вӑрмана уйрӑм пропускӑр пыма пултаракансене вырӑнтах персе пӑрахмалла пулассипе ҫинчен асӑрхаттарса ҫырнисем кӑларса ҫакнӑ.

Уйрӑмах Катынь вӑрманӗн «Козьи Горы» текен вырӑна, ҫавӑн пекех тата Днепр ҫыранӗн хӗрринчи территорие хытӑ сыхланӑ. Унта поляксен тыткӑна лекнӗ ҫыннисен виле шӑтӑкне тупнӑ вырӑнтан 700 метрта дача—НКВД Смоленск управленийӗн кану ҫурчӗ пулнӑ. Нимӗҫсем килсе тухсан ҫак дачӑна нимӗҫсен «537-мӗш строительнӑй батальон штабӗ» текен учреждени вырнаҫнӑ.

Тыткӑна лекнӗ поляксем Смоленск районӗнче

Ятарласа тунӑ комисси ҫакна палӑртнӑ: нимӗҫ оккупанчӗсем Смоленск хулине туртса иличчен облаҫӑн хӗвеланӑҫ районӗсенче шоссе ҫулӗсем тунӑ тата юсанӑ ҫӗрте поляксен тыткӑна лекнӗ офицерӗсемпе салтакӗсем ӗҫленӗ. Поляксен тыткӑна лекнӗ ҫар ҫыннисем уйрӑм назначенин виҫӗ лагерӗнче вырнаҫса пурӑннӑ: 1-мӗш-ОН, 2-мӗш-ОН тата 3-мӗш-ОН лагерьсем. Вӗсем Смоленскран хӗвеланӑҫ енче 25—45 километртра пулнӑ.

Свидетельсем каласа панӑ тӑрӑх тата документсем тӑрӑх ҫакна палӑртнӑ: вӑрҫӑ пуҫланнӑ хыҫҫӑн, лару-тӑру ҫавӑн пек пулса тӑнӑ пирки, лагерьсене вӑхӑтра куҫарса кайма май пулман, ҫавӑн пирки поляксен тыткӑна лекнӗ ҫар ҫыннисем, ҫавӑн пекех тата лагерьсен хуралӗн пӗр пайӗ тата лагерь сотрудникӗсем нимӗҫсен аллине тыткӑна лекнӗ.

Ятарласа уйӑрнӑ комисси допрос тунӑ 1-мӗш-ОН лагерӗн начальникӗ пулнӑ государство хӑрушсӑрлӑхӗн майорӗ **В. М. Ветошников** ҫапла каласа панӑ:

«...Эпӗ лагере хупасси ҫинчен приказ пуласса кӗтрӗм, анчах Смоленскпа ҫыхӑну тытасси чарӑнса ларчӗ. Вара эпӗ хам темиҫе сотрудникпа пӗрле ӗҫ мӗнле килсе тухнине пӗлме Смоленска тухса кайрӑм. Смоленскра эпӗ ӗҫсем йывӑрланса ҫитнине куртӑм. Эпӗ Хӗвеланӑҫ чугун ҫулӗн Смоленск участокӗнчи движени начальникӗнчен **Иванов** юлташран лагерь валли тыткӑна лекнӗ поляксене илсе тухма вагонсем ыйтрӑм. Анчах **Иванов** юлташ мана вагонсем илессе шанма пултараймастӑр, тесе ответ пачӗ. Эпӗ ҫавӑн пекех тата ҫуран тухмалла тӑвас тесе Мускавпа ҫыхӑнма хӑтланса пӑхрӑм, анчах ун пек тума май килмерӗ.

Ку вӑхӑт тӗлне Смоленска нимӗҫсем лагерьтан уйӑрса илнӗ, тыткӑна лекнӗ поляксемпе тата лагерьте юлнӑ охранӑпа мӗн пулнине эпӗ пӗлместӗп».

1941 ҫулхи июль уйӑхӗнче Хӗвеланӑҫ чугун ҫулӗн Смоленск участокӗнче движени начальникӗ пулса ӗҫленӗ **С. В. Иванов** инженер ятарласа тунӑ комиссие ҫапла пӗлтернӗ:

«Ман пата отделение поляксен тыткӑна лекнӗ ҫар ҫыннисен лагерӗн администрацийӗ поляксене ӑсатма вагонсем ыйтма пычӗ, анчах пирӗн пушӑ вагонсем пулман. Кунсӑр пуҫне Гусино ҫулӗ ҫине, поляксем тыткӑна лекнӗ ҫар ҫыннисем нумайрах пулнӑ вырӑна, эпир вагонсем пама пултарайман, мӗншӗн тесен ку ҫула нимӗҫсем персе тӑнӑ. Ҫавӑнпа та эпир лагерьсен администрацийӗн ыйтӑвне пурнӑҫа кӗртме пултарайман. Ҫапла вара тыткӑна лекнӗ поляк ҫар ҫыннисем Смоленск облаҫӗнех юлнӑ».

Тыткӑна лекнӗ поляксем Смоленск облаҫӗнчи лагерьсенче тӑнине нумай свидетельсем ҫирӗплетсе параҫҫӗ, вӗсем ҫак поляксене Смоленск ҫывӑхӗнче оккупаци пуҫланнӑ малтанхи уйӑхсенчен пуҫласа 1941 ҫулхи сентябрь уйӑхӗ таранччен курнӑ.

Свидетельница Мария Александровна **Сашнева**, Зеньково ялӗнчи пуҫламӑш шкул учительници, ятарласа тунӑ комиссие вӑл 1941 ҫулхи август уйӑхӗнче лагерьтен тарса тухнӑ поляк ҫыннине хӑйӗн Зеньково ялӗнчи килӗнче усрани ҫинчен каласа панӑ.

«...Поляк Польша ҫар формипе пулнӑ, эпӗ ӑна ҫавӑнтах пӗлтӗм, мӗншӗн тесен 1940—41 ҫулсенче шоссе ҫулӗ ҫинче поляксен тыткӑна лекнӗ ҫар ҫыннисен ушкӑнне куртӑм, вӗсем конвой хӳтӗленипе ҫул ҫинче ӗҫлетчӗҫ... Поляк мана ҫакӑн пирки интереслентерчӗ: вӑл, паллӑ пулнӑ тӑрӑх, ҫар службине лекиччен Польшӑра пуҫламӑш шкул учителӗ пулса ӗҫленӗ. Эпӗ педтехникумран вӗренсе тухнӑ тата учительница пулма хатӗрленнӗ май, унпа сӑмахлама пуҫларӑм. Вӑл мана Польшӑра учительсен семинарийӗнчен вӗренсе тухни ҫинчен, каярахпа темӗнле ҫар шкулӗнче вӗренни ҫинчен тата запасри подпоручик пулса тӑни ҫинчен каласа пачӗ. Польшӑпа Германи хушшинче вӑрҫӑ пуҫлансан ӑна действительнӑй служӑна илнӗ, Брест-Литовскра тӑнӑ, унта вӑл Хӗрлӗ Ҫар чаҫӗсен аллине тыткӑна лекнӗ... Пӗр ҫулталанӑк ытла вӑл Смоленск патӗнчи лагерьте пулнӑ.

Нимӗҫсем килсен, вӗсем поляксен лагерьне ярса илнӗ те, унта питӗ тискер йӗрке туса хунӑ. Нимӗҫсем поляксене ҫын вырӑнне шутламан, вӗсене пур майсемпе те хӗсӗрленӗ, вӗсенчен мӑшкӑланӑ. Поляксене нимӗн сӑлтавсӑр персе пӑрахнисем те пулнӑ. Вара вӑл тарса тухма шутланӑ. Хӑйӗн ҫинчен каласа панӑ чухне вӑл унӑн арӑмӗ те учительница пулни ҫинчен, унӑн икӗ шӑллӗ тата икӗ йӑмӑкӗ пулни ҫинчен каланӑ...»

Тепӗр кунне, **Сашнева** патӗнчен тухса кайнӑ чухне поляк хӑйӗн хушаматне каласа пӗлтернӗ. **Сашнева** унӑн хушаматне кӗнеке ҫине ҫырса хунӑ. **Сашнева** ятарласа тунӑ комиссие тӑратнӑ Ягодовскин «Практические занятия по естествознанию» ятлӑ кӗнекен юлашки странипи ҫине ҫакӑн пек ҫырса хунӑ вырӑн пур:

Тыткӑна лекнӗ поляксене йӗрлесе тытни

Смоленск районӗсенче 1941 ҫулхи кӗркунне тыткӑна лекнӗ поляксем пулнине нимӗҫсем лагерьтен тарса кайнӑ ҫар ҫыннисене хупӑрласа темиҫе хутчен те облавӑсем туса ирттерни те кӑтартса парать.

Свидетель **И. М. Картошкин**, платник, ҫапла каланӑ:

«Тыткӑна лекнӗ поляксене нимӗҫсем 1941 ҫулхи кӗркунне вӑрмансенче ҫӗс шыраман тата ялсенче касхине ухтарусем тума полицие те хутшӑнтарнӑ».

Новые Батеки ялӗнче староста пулнӑ **М. Д. Захаров** ҫапла каласа панӑ: 1941 ҫулхи кӗркунне нимӗҫсем тыткӑна лекнӗ поляксене шыраса ялсемпе вӑрмансене пӑшалсенчен перетчӗҫ.

Свидетель **Н. В. Даниленков**, «Красная Заря» колхоз хресченӗ, ҫапла каланӑ:

«Пирӗн патӑрта тыткӑна лекнӗ поляксене, лагертен тарса кайнӑскерсене, шыраса тупас тесе ятарласа облавӑсем ирттеретчӗҫ. Ҫакӑн пек ухтарусем манӑн киле те икӗ е виҫӗ хутчен пулнӑ. Пӗр ухтару хыҫҫӑн эпӗ старостӑран—Константин **Сергеевран**: пирӗн ялта кама шыраҫҫӗ, тесе ыйтрӑм. **Сергеев** мана каларӗ: нимӗҫ комендатуринчен приказ килнӗ, ҫав приказ тӑрӑх пур килсенче те ухтару туса ирттермелле, мӗншӗн тесен пирӗн ялта тыткӑна лекнӗ поляксем, лагерьтен тарса тухнӑскерсем, пурӑнаҫҫӗ. Пӑртак вӑхӑт иртсен ухтарусем чарӑнчӗҫ».

Свидетель **Т. Е. Фатьков**, колхозник, ҫапла кӑтартса панӑ:

«Тыткӑна лекнӗ поляксене шыраса темиҫе хутчен те ухтарусем ирттернӗ. Ку вӑл 1941 ҫулхи август-сентябрь уйӑхӗсенче пулнӑ. 1941 ҫулхи сентябрь хыҫҫӑн ҫавӑн пек ухтарусем чарӑнчӗҫ, ҫакӑн хыҫҫӑн вара урӑх никам та поляксен тыткӑна лекнӗ ҫыннисене курман».

Тыткӑна лекнӗ поляксене персе вӗлерни

Ҫӳлте асӑннӑ «537-мӗш строительнӑй батальон штабӗ», «Козьи Горы» дачине вырнаҫнӑскер, нимӗнле строительство ӗҫӗсем те туман. Унӑн пӗтӗм ӗҫӗ вӑрттӑнлӑхра пулса пынӑ.

Чӑнах та мӗн тунӑ-ха ҫак «штаб»? Кун пирки нумай свидетельсем, вӑл шутра свидетельницӑсем: **А. М. Алексеева**, **О. А. Михайлова**, **З. П. Конаховская**—Катынь ял Советӗнчи Борок ялӗнче пурӑнакансем каласа параҫҫӗ.

Катынь поселокӗнчи нимӗҫ коменданчӗ хушнипе вӗсене Борок ялӗнчи староста **В. И. Солдатенков** асӑннӑ дачӑна вырнаҫнӑ «штаб» ҫыннисем патӗнче ӗҫлеме янӑ.

«Козьи Горы» тенӗ вырӑна ҫитсен вӗсене тӑлмач урлӑ чылай пӳлӳсем ҫинчен пӗлтернӗ: вӗсене дачӑран инҫе кайма тата вӑрманта ҫӳреме, нимӗҫ салтакӗсем чӗнмесӗр тата ӑсатмасӑр дачӑри пӳлӗмсене кӗме, дачӑра ҫӗр каҫа юлма чарнӑ. Вӗсен ӗҫе килсе е каяс пулсан пӗр палӑртнӑ ҫулпа тата салтаксем ӑсатнипе кӑна ҫӳремелле пулнӑ.

Ҫакӑн ҫинчен **Алексеевӑна, Михайловӑна, Конаховскаяна** тӑлмач урлӑ нимӗҫ учрежденийӗн начальникӗ оберст-лейтенант **Арнес** хӑй пӗлтернӗ, ҫавӑн пек пӗлтерме вӑл вӗсене кашнине уйрӑммӑн хӑй патне чӗнсе кӗртсе каланӑ.

«Штабӑн» личнӑй составӗ ҫинчен **А. М. Алексеева** ҫапла каласа панӑ:

«Козьи Горы» дачӑра ялан 30 нимӗҫе яхӑн пулнӑ, вӗсен асли оберст-лейтенант **Арнес** пулнӑ, унӑн адъютанчӗ обер-лейтенант Рекст пулнӑ. Унта ҫавӑн пекех тата лейтенант Хотт, вахмистр Люмерт, хуҫалӑх енӗпе ӗҫлекен унтер-офицер Розе, унӑн помощникӗ Изике, обер-фельдфебель Греневский, вӑл электростанцие пӑхса тӑнӑ, фотограф обер-ефрейтор—унӑн хушаматне астумастӑп, Атӑл тӑрӑхӗнчи нимӗҫсенчен тухнӑ тӑлмач, унӑн ячӗ Иоганн пулас, анчах ӑна эпир Иван тенӗ; повар Густав нимӗҫ тата ыттисем те, вӗсен хушамачӗсемпе ячӗсем мана паллӑ мар».

Ӗҫе кӗнӗ хыҫҫӑн **Алексеева, Михайлова** тата **Конаховская** часах дачӑра «темӗнле тӗттӗм ӗҫсем» тунине асӑрхама пуҫланӑ.

А. М. Алексеева ҫапла каласа панӑ:

«...Тӑлмач Иоганн пире **Арнес** ячӗпе темиҫе хутчен те «чӗлхене шӑл хушшинче тытмалли» ҫинчен тата дачӑра мӗн курни тата илтни ҫинчен сӑмахлама юраманни ҫинчен асӑрхаттарнӑ.

Кунсӑр пуҫне тата ытти чылай сӑлтавсем тӑрӑх ҫак дачӑра нимӗҫсем темӗнле тӗттӗм ӗҫсем туни ҫинчен туйса илнӗ эпӗ...

1941 ҫулхи август уйӑхӗн вӗҫӗнче тата сентябрь уйӑхӗн пуҫламӑшӗнче «Козьи Горы» дачине кашни кун тенӗ пекех темиҫе грузовой машина килсе тӑратчӗ.

Малтан эпӗ кӑна шута хуман, анчах каярахпа ҫакна асӑрханӑ: дача территорине ҫак машинӑсем кашни килмессеренех шоссе патӗнчен дачӑна пыракан ҫул ҫинче малтанлӑха ҫур сехете е пӗр сехете яхӑн та чарӑнса тӑратчӗҫ.

Ҫакна эпӗ акӑ мӗн пирки пӗлме пултарнӑ: машина сасси дача территорине кӗрсен пӑртак вӑхӑт иртсен чарӑнатчӗ. Машина сасси чарӑннипе пӗр вӑхӑтрах пӗчченшерӗн пени илтӗнетчӗ. Пӑшал сасси пӗрин хыҫҫӑн теприн кӗске вӑхӑтран, анчах та пӗр пек вӑхӑтра илтӗнетчӗ. Ҫакӑн хыҫҫӑн пӑшал сасси илтӗнми пулатчӗ те машинӑсем дача патне пыратчӗҫ.

Машина ҫинчен нимӗҫ салтакӗсемпе унтер-офицерӗсем тухатчӗҫ. Вӗсем пӗр-пӗринпе шавлӑ калаҫса, ҫавӑнма мунчана каятчӗҫ, ун хыҫҫӑн ӗҫме тытӑнатчӗҫ. Ку кунсенче мунчана тӑтӑшах хутнӑ.

Дачӑна машинӑсем килнӗ кунсенче нимӗҫсен темӗнле ҫар чаҫӗнчен тата ҫӗнӗ салтаксем килетчӗҫ. Вӗсем валли дачӑри залсенчен пӗринче салтаксем валли ятарласа организацисенӗ казинона ятарласа койкӑсем лартса панӑ. Ҫав кунсенче апат кухньӑра питӗ нумай хатӗрленӗ, апат умӗн эрехсем икӗ хут ытларах панӑ.

Машинӑсем дачӑна киличчен пӑртак маларах салтаксем пӑшал тытса вӑрмана каятчӗҫ, унта машинӑсем чарӑнса тӑраҫҫӗ пулмалла, мӗншӗн тесен ҫур сехетрен е сехетрен ҫак машинӑсем ҫине ларса вӗсем дачӑра ялан пурӑнакан салтаксемпе пӗрле ларса таврӑнатчӗҫ.

Эпӗ дачӑна килекен машинӑсен шавӗ лӑпланнине е ҫӗнӗрен пуҫланнине асӑрхаман пулӑттӑм тата астуман та пулӑттӑм, анчах машинӑсем килнӗ чухне кашнинчех пире (мана, **Конаховскаяна** тата **Михайловӑна**) эпир ку вӑхӑт тӗлӗнче дача умӗнчи картишӗнче пулсан, кухньӑна хупса кӗртетчӗҫ е тата ку вӑхӑтра эпир кухньӑра пулсан пире кухньӑран кӑлармастчӗҫ.

Ҫакӑн пек тунипе, ҫавӑн пекех тата икӗ ефрейтор тумтирӗ ҫинче темиҫе хутчен те чӗрӗ юн йӗрӗ юлнине асӑрханипе эпӗ дачӑра пулса иртекен ӗҫсем ҫине тимлӗрех пӑхма пуҫларӑм. Вара эпӗ машинӑсем ҫӳренӗ е вӗсем вӑрманта чарӑнса тӑнӑ вӑхӑтра шав лӑпланнине асӑрхама пуҫларӑм. Ҫавӑн пекех тата эпӗ ҫакна та астурӑм: юн йӗрӗ яланах ҫав пӗр ҫынсен—икӗ ефрейтор тумтирӗ ҫинче пулатчӗ. Вӗсенчен пӗри ҫӳлӗ, хӗрлӗ ҫын, тепри вӑтам пӳллӗ, сарӑ ҫын.

Ҫакӑнтан эпӗ акӑ мӗнле вывод турӑм: нимӗҫсем машинӑсем ҫине ҫынсем лартса дачӑна илсе килнӗ, вӗсене пере-пере пӑрахнӑ. Эпӗ ҫакӑн пек пулнине тата дачӑна килнӗ е кайнӑ чухне ҫул хӗрринчен инҫех мар темиҫе вырӑнта ҫӗнӗ тӑпра йӗрӗ асӑрхаттӑмччӗ. Ҫӗнӗ тӑпра кӑларнӑ ҫӗр лаптӑкӗн тӑршшӗ кашни кун ӳсе пынӑ. Вӑхӑт иртнӗҫемӗн ҫак вырӑнта каллех халичченхи пек пулса тӑнӑ».

Ятарласа тунӑ комисси: дача сывӑхӗнчи вӑрманта мӗнле ҫынсене пере-пере пӑрахнӑ тесе ыйтнине хирӗҫ, **Алексеева** ҫапла каланӑ: тыткӑна лекнӗ поляксене персе пӑрахнӑ. Ҫакна ҫирӗплетсе вӑл ҫапла каланӑ:

«Дачӑна машинӑсем килмен кунсем те пулнӑ, апла пулсан та салтаксем дачӑран пӗрмаях вӑрмана каятчӗҫ, унтан хӑвӑрттӑн пӗчченшерӗн пенӗ пӑшал сассисем илтӗнетчӗҫ. Каялла таврӑннӑ хыҫҫӑн салтаксем обязательно мунча кӗме каятчӗҫ, ун хыҫҫӑн ӗҫкӗ пуҫланатчӗ.

Акӑ тата пӗр ӗҫ. Пӗррехинче эпӗ тем пирки дачӑра халичченхи вӑхӑтран пӑртак каярах юлтӑм. **Михайловӑпа Конаховская** тухса кайнӑ ӗнтӗ. Эпӗ хам ӗҫе туса ҫитерейменччӗ, сасартӑк пӗр салтак пычӗ те: эсӗ киле кайма пултаран, терӗ. Ҫакӑн пек тума Розе хушнӑ, терӗ. Шоссе ҫулӗ патне ҫитиччен мана вӑлах ӑсатса ячӗ.

Дача патӗнчен пӑрӑнса шоссе тӑрӑх 150—200 метр кайсан, эпӗ тыткӑна лекнӗ поляксен ушкӑнӗ, 30 ҫын таран, нимӗҫсен вӑйлӑ конвойӗпе пынине куртӑм.

Вӗсем поляксем пулнине эпӗ ҫакӑн пирки пӗлме пултарнӑ: вӑрҫӑчченех, ҫавӑн пекех тата нимӗҫсем килнӗ хыҫҫӑн пӑртак вӑхӑт иртсен те эпӗ шоссе ҫинче тыткӑна лекнӗ поляксене курнӑ, вӗсем те ҫавсем пекех хӑйсене уйрӑм тӑвата кӗтеслӗ картус тӑхӑнса ҫӳретчӗҫ.

Эпӗ вӗсене ӑҫта илсе каяссине курас тесе ҫул хӗрринче чарӑнса тӑтӑм, вара вӗсем пирӗн «Козьи Горы» дача патне пӑрӑнса кайнине куртӑм.

Ку вӑхӑт тӗлне дачӑра пулакан пур ӗҫсене те тимлӗрех асӑрхама пуҫланӑ май, ҫак мӗне пӗлтернине интереслентӗм. Ҫавӑн пирки те шоссе тӑрӑх пӑртак кайсан каялла ҫаврӑнтӑм та ҫул хӗрринчи канавсем патӗнчи тӗмӗсем хушшине пытанса мӗн пулассса кӗтме пуҫларӑм. Тепӗр 20 е 30 минутран эпӗ каллех пӑшал пенӗ сасса илтме пуҫларӑм.

Вара мана пурте паллӑ пулса тӑчӗ, эпӗ хӑвӑрт каялла таврӑнтӑм.

Ҫак фактран эпӗ акӑ мӗнле вывод турӑм: нимӗҫсем поляксене эпир дачӑра ӗҫленӗ вӑхӑтра кӑнтӑрла ҫеҫ мар тата эпир ҫук чухне касхине те пере-пере пӑрахнӑ. Мана ҫакӑ вӑл тата акӑ мӗн пирки те паллӑ пулса тӑчӗ: пӗррехинче дачӑра пурӑнакан пӗтӗм офицерсемпе салтаксем, часовойсемсӗр пуҫне, питӗ кая юлса, кӑнтӑрла 12 сехет тӗлне кӑна вӑранчӗҫ.

«Козьи Горы» дачӑна поляксем килсе ҫитнине эпир темиҫе хутчен те ҫак вӑхӑтра дачӑра пулса тӑнӑ хӗрӳ вӑхӑтран пӗлеттӗмӗр.

Офицерсем пурте дачӑран тухса каятчӗҫ, унта караульнӑйсем кӑна юлатчӗҫ, вахмистр вара телефон тӑрӑх вӗҫӗмсӗр постсене тӗрӗслетчӗ...»

О. А. Михайлова ҫапла каласа панӑ:

«1941 ҫулхи сентябрь уйӑхӗнче «Козьи Горы» вӑрманӗнче час-часах пӑшал сасси илтӗннӗ. Малтан эпӗ пирӗн дача патне айккисенчен тата ҫултен витнӗ, симӗс тӗспе сӑрланӑ грузовой автомашинӑсем килсе чарӑннине питех тимлемен, вӑл машинӑсене яланах унтер-офицерсем ӑсататчӗҫ. Каярахпа эпӗ ҫакна асӑрхарӑм. Ҫак машинӑсем нихҫан та пирӗн гаража кӗместчӗҫ, ҫав вӑхӑтрах вӗсене пушатмастчӗҫ те. Ҫакӑ грузовой автомашинӑсем питӗ час-час килсе тӑратчӗҫ, уйрӑмах 1941 ҫулхи сентябрь уйӑхӗнче ҫавӑн пекчӗ.

Кабинӑра яланах шоферпа пӗрле ларса пыракан унтер-офицерсем хушшинче эпӗ пӗр ҫӳлӗ те шуҫка питлӗ, хӗрлӗ ҫӳҫлӗ ҫынна асӑрхама пуҫларӑм. Ҫак машинӑсем пирӗн дача патне килсе ҫитсен унтер-офицерсем пурте, команда панӑ пек, мунчана кайса нумайччен ҫӑвӑнатчӗҫ. Ун хыҫҫӑн хытӑ ӗҫме пуҫлатчӗҫ.

Пӗррехинче ҫав ҫӳлӗ те хӗрлӗ ҫӳҫлӗ нимӗҫ машинӑран тухса кухньӑна пычӗ те ӗҫме шыв ыйтрӗ. Вӑл стаканран шыв ӗҫнӗ чухне унӑн мундирӗн сулахай ҫаввинчи обшлагӗ ҫинче юн куртӑм».

О. А. Михайлова тата **З. П. Конаховская** пӗррехинче хӑйсен куҫӗпе тыткӑна лекнӗ, нимӗҫсем патӗнчен тарса тухнӑ, анчах та каярахпа тытнӑ икӗ поляка персе пӑрахнине курнӑ.

Кун пирки **Михайлова** ҫапла калать:

«Пӗррехинче, яланхи пекех, эпӗ тата **Конаховская** кухньӑра ӗҫлеттӗмӗр. Дачӑран инҫех мар шап илтрӗмӗр. Алӑкран тухсан эпир тыткӑна лекнӗ икӗ поляка куртӑмӑр, вӗсене нимӗҫ салтакӗсем хупӑрласа илнӗ. Нимӗҫ салтакӗсем унтер-офицер **Розене** темӗн ӑнлантарса параҫҫӗ. Вара вӗсем патне оберст-лейтенант **Арнес** пычӗ, **Розене** тем ҫинчен каларӗ. Эпир айккинелле пытанса тӑтӑмӑр, мӗншӗн тесен ҫакӑн пек пӗлме тӑнӑшӑн пире **Розе** хӗнессӗрен хӑрарӑмӑр. Анчах пире ҫапах та асӑрхарӗҫ, вара механик **Глинзевский**, **Розе** паллӑ панипе, пире кухньӑна хупса кӗртрӗ, поляксене дача еннелле илсе кайрӗ. Темиҫе минутран эпир пӑшал сасси илтрӗмӗр. Часах каялла ҫаврӑнса килнӗ салтаксем унтер-офицер **Розепе** хӗрсе калаҫрӗҫ. Эпӗ тата **Конаховская** тытса чарнӑ поляксене нимӗҫсем мӗн тунине пӗлес тесе каллех урама тухрӑмӑр. Ирӗнче пӗр вӑхӑтрах дачӑран тепӗр хапхапа тухнӑ **Арнес** адютанчӗ **Розерен** нимӗҫле темскер ыйтрӗ, **Розе** те ҫавӑн пекех нимӗҫле таврӑса каларӗ: «Пурте йӗркеллӗ», терӗ. Ку сӑмахсене эпӗ ӑнлантӑм, мӗншӗн тесен нимӗҫсем пӗр-пӗринпе калаҫнӑ чухне час-часах ҫапла калаҫатчӗҫ. Ҫак пӗтӗм ӗҫрен эпӗ икӗ поляка персе пӑрахрӗҫ пулӗ, тесе шутларӑм».

Ҫак ыйту тӑрӑх **З. П. Конаховская** та ҫавӑн пекех каласа парать.

Дачӑра пулса иртнӗ ӗҫсем пирки хӑраса ӳкнӗ **Алексеева, Михайлова** тата **Конаховская** кирек мӗнле сӑлтав та пулин тупса дачӑри ӗҫе пӑрахма шут тытнӑ. Хӑйсен уйӑхри «ӗҫ укҫине» 9 маркӑран 3 марка таран чакарнипе усӑ курса, 1942 ҫулхи январь уйӑхӗн пуҫламӑшӗнче вӗсем, **Михайлова** сӗннипе, ӗҫе тухман. Ҫав кунхинех вӗсем патне касхине машинӑпа пырса ҫитнӗ, каллех дачӑна илсе кайнӑ, вӗсене айӑпласа сивӗ пӳлӗме: **Михайловӑна** 8 талӑка, **Алексеевӑпа Конаховскаяна** 3 талӑка хупса лартнӑ.

Ҫак срока ларса ирттернӗ хыҫҫӑн вӗсене пурне те ӗҫрен кӑларса янӑ.

Дачӑра ӗҫленӗ вӑхӑтра **Алексеева, Михайлова** тата **Конаховская** дачӑра пулса иртекен ӗҫсем ҫинчен пӗр-пӗринпе те калаҫма хӑранӑ. Хӑйсене арестленӗ хыҫҫӑн тин вӗсем сивӗ пӳлӗмре ларнӑ чухне ҫӗрле ҫакӑн ҫинчен пӗр-пӗрне хӑйсен шухӑшӗсене пӗлтернӗ.

Михайлова 1943 ҫулхи декабрӗн 24-мӗшӗнче тунӑ допросра ҫапла каласа панӑ:

«Кунта эпир пирвайхи хут дачӑра мӗн пулса иртни ҫинчен пӗр-пӗринпе уҫҫӑн калаҫрӑмӑр. Эпӗ хам мӗн пӗлнине пӗтӗмпех каласа патӑм, анчах **Конаховскаяпа Алексеева** та эпӗ пӗлнӗ фактсене пӗлнӗ, анчах вӗсем те ман пекех ҫакӑн ҫинчен мана каламасӑр хӑранӑ. Кунтах эпӗ нимӗҫсем «Козьи Горы» дачӑра шӑпах та тыткӑна илнӗ поляксене персе пӑрахнине пӗлтӗм. **Алексеева** каласа панӑ тӑрӑх, вӑл 1941 ҫулхи кӗркунне пӗррехинче ӗҫрен таврӑннӑ чухне нимӗҫсем «Козьи Горы» вӑрманне тыткӑна лекнӗ поляксен пысӑк ушкӑнне хуса кӗртнине курнӑ, ун хыҫҫӑн вара ҫав вырӑнта вӑл пӑшал сасси илтнӗ».

Алексеевӑпа Конаховская та ҫавӑн пекех каласа панӑ.

Хӑйсем асӑрханисене танлаштарса пӑхнипе **Алексеева, Михайлова** тата **Конаховская** ҫакӑн пек вывод патне пырса тухнӑ: 1941 ҫулхи августпа сентябрь уйӑхӗсенче «Козьи Горы» дачӑра нимӗҫсем тыткӑна лекнӗ поляксене массӑллӑн персе пӑрахнӑ.

Алексеева каласа панисене унӑн ашшӗ Михаил **Алексеев** ҫирӗплетет. **Алексеева** хӑйӗн ашшӗне вӑл хӑй 1941 ҫулхи кӗркунне дачӑра ӗҫленӗ чухнех нимӗҫсем дачӑра тӑвакан ӗҫсем ҫинчен хӑй асӑрханисене каласа панӑ.

«Вӑл нумай вӑхӑт хушши мана нимӗн те каламарӗ,— тет Михаил **Алексеев**.— Вӑл киле таврӑнсан кӑна дачӑра ӗҫлеме питӗ хӑрушӑ, унтан мӗнле хӑтӑлса тухассине пӗлместӗп тетчӗ. Эпӗ унтан: дачӑра ӗҫлеме мӗншӗн хӑрушӑ тесе ыйтсан, вӑл: вӑрманта часчасах пӑшал сасси илтӗнет, терӗ. Пӗррехинче киле таврӑнсан вӑл мана никама пӗлтермелле мар тесе «Козьи Горы» вӑрманӗнче нимӗҫсем поляксене персе пӑрахни ҫинчен каларӗ. Ҫавӑн пек каланине илтнӗ хыҫҫӑн эпӗ ӑна хытарса: урӑх ун ҫинчен никама та каласа ан пар, унсӑрӑн, нимӗҫсем пӗлсен, пирӗн пӗтӗм кил-йыш сиен курать терӗм».

«Козьи Горы» вӑрманне тыткӑна лекнӗ поляксене пӗчӗк ушкӑнсемпе 20—30 ҫын таран, нимӗҫ салтакӗсен 5—7 ҫынран тӑракан хуралӗсем илсе пыни ҫинчен ятарласа тунӑ Комисси ыйтса пӗлнӗ ытти свидетельсем те каласа панӑ: **П. Г. Киселев** — «Козьи Горы» хутор хресченӗ, **М. Г. Кривозерцев** — Катынь вӑрманӗнчи Красный Бор станцинче ӗҫлекен платник, **С. В. Иванов** — Катынь вӑрман районӗнчи Гнездово станци начальникӗ пулнӑскер, **И. В. Савватеев** — ҫав станцӑри дежурнӑй, **А. М. Алексеев**—Борок ялӗнчи колхоз председателӗ, **А. П. Оглоблин** — Куприн чиркӗвӗнчи священник тата ыттисем те.

Ҫак свидетельсем «Козьи Горы» вӑрманӗнчен пӑшал сассисем илтнӗ.

1941 ҫулхи кӗркунне «Козьи Горы» дачинче пулса иртнӗ ӗҫсене палӑртас тӗлӗшпе астрономи профессорӗ, Смоленскри обсерватори директорӗ **Б. В. Базилевский** каласа пани пысӑк пӗлтерӗшлӗ.

Нимӗҫсем Смоленска оккупаци тунӑ малтанхи кунсенчех профессор **Базилевские** вӑйпах хула начальникӗн (бургомистрӑн) заместителӗ пулма, хула начальникӗ пулма адвокат **Б. Г. Меньшагина** уйӑрса лартнӑ. Вӑл каярахпа нимӗҫсемпе пӗрле тухса кайнӑ, ҫак сутӑнчӑк нимӗҫ командованийӗ умӗнче, уйрӑммӑн илсен, Смоленск коменданчӗ фон-**Швец** умӗнче пысӑк шанӑҫра пулнӑ.

1941 ҫулхи сентябрь пуҫламӑшӗнче **Базилевский** тыткӑна лекнисен 126-мӗш лагерӗнчен **Жиглинский** педагога хӑтарасси ҫинчен **Меньшагин** комендантпа фон-**Швец** умӗнче ходатайство тӑратма ыйтнӑ. Ҫак ыйтӑва пурнӑҫласа **Меньшагин** фон-**Швец** умне ыйту тӑратнӑ, каярахпа **Меньшагин Базилевскине**: унӑн ыйтӑвне пурнӑҫлама май ҫук, мӗншӗн тесен, фон-**Швец** каланӑ тӑрӑх, Берлинран кӑтарту килнӗ, тыткӑна илнисем тӗлӗшпе ҫирӗп режим пулмалла, ку ыйту тӑрӑх нимӗнле сӑмаллӑх та пулма пултараймасть, тесе пӗлтернӗ.

«Манӑн ирӗксӗрех хирӗҫмелле пулчӗ,— тет **Базилевский**,— лагерьти режимран йывӑрри тата мӗн пулать? **Меньшагин** ман ҫине темле пӑхрӗ те ман енне тайӑлса шӑппӑн ҫапла каларӗ: «Пулма пултарать! Вырӑссем тен хӑйсемех вилсе пӗтӗҫ, анчах тыткӑна лекнӗ поляксене пӗтӗмпех пӗтерсе тӑкма хушнӑ».

«Мӗнле капла? Кӑна мӗнле ӑнланмалла?»—тесе ыйтрӑм эпӗ.

«Кирлӗ пек ӑнланмалла. Берлинран ҫавӑн пек кӑтартусем килнӗ»,— терӗ **Меньшагин**, вӑл тата ҫавӑнтах мана кун пирки никама та каламалла мар терӗ.

«Тепӗр икӗ эрнесенчен **Меньшагинпа** ҫакӑн пек калаҫнӑ хыҫҫӑн, эпӗ ун патӗнче пулнӑ чухне ҫакӑн пек ыйтмасӑр чӑтаймарӑм: «Поляксем ҫинчен мӗн илтӗнет?» **Меньшагин** тӑхтаса тӑчӗ, кайран ҫапла каларӗ: «Вӗсемпе ӗҫ пӗтнӗ ӗнтӗ. Фон-**Швец** мана вӗсене Смоленск патӗнчен инҫе мар тахӑш вырӑнта персе пӑрахнӑ терӗ».

(Малалли 4 стр.).

*) Ку Пӗлтерӗве «Правда» хаҫатӑн 1944 ҫулхи январӗн 26-мӗшӗнчи номерӗнче пичетлесе кӑларнӑ.

Нимĕçсен фашистла захватчикĕсем поляксен тыткăна лекнĕ офицерĕсене Катынь вăрманĕнче персе вĕлернине тĕпчесе пĕлме Ятарласа тунă Комисси ПĔЛТЕРНИ

(Малалли. Пуçламăшĕ 3-мĕш стр.)

Эпĕ суххалса кайнине курса, Меньшагин мана тата тепĕр хут тытарса çак ĕç синчен никама та пĕлтерме кирлĕ марри синчен асăрхаттарчĕ, ку ыйту тĕлĕшпе нимĕçсемпе мĕнле сул-йĕр тытни синчен «кăшăнтарса пама» пусмарĕ. Вăл мана каларĕ: поляксене персе пăрахни Германи Польшăна хирĕç тытакан политикин пĕр пайĕ пулса тăрать, çак политика вăл уйрăмах вырăссемпе поляксен хушшинче договор тунă хыççăн вăйланса ситрĕ».

Базилевский çавăн чухнех ятарласа тунă комиссие хăй нимĕç комендатурин 7-мĕш пайĕн зондерфюрерĕпе Гиршфельдпа—Балти тăрăхĕнчи нимĕçпе калаçни синчен каласа панă. Çав нимĕç вырăсла лайăх пĕлнĕ.

«Гиршфельд» мана ирсĕр сĕмсĕрлĕхпе уççăнах çапла каларĕ: поляксен сиенлĕ пулнине тата вĕсем тулли хаклă халăх пулманнине истори кăтартса панă, çавăнпа та Польша халăхĕн йышĕ чакни çĕре çемçетмелли удобрени пулса тăрать, вăл Германи пурнăç талккишне асăлатма май парать». Çакна май Гиршфельд мухтанса Польшăри интеллигенци пачах юлмарĕ, мĕншĕн тесен ăна çакса, персе, лагерьсене хупса пĕтернĕ, терĕ».

Базилевский каласа панисене ятарласа тунă комисси ыйтса пĕлнĕ свидетельсем—физика профессорĕ И. Е. Ефимов çирĕплетсе парать. Ăна Базилевский хăй Меньшагинпа калаçни синчен 1941 çулхи кĕркуннех каласа панă.

Базилевский тата Ефимов каласа панисене Меньшагин хăйĕн блокночĕнче çырса хунисем те çирĕплетсе парасçĕ.

Ку блокнотра тулли мар 17 страница, ăна Хĕрлĕ Çар Смоленска ирĕке кăларнă хыççăн хула тытăмĕн ĕçĕсенче тупнă.

Вăл блокнот чăнах та Меньшагин блокночĕ пулнине Базилевский те, графологи экспертизи те çирĕплетесçĕ. Меньшагин аллине Базилевский лайăх пĕлнĕ.

Блокнотри хатăсем кăтартнă тăрăх, ăна 1941 çулхи август уйăхĕн малтанхи кунĕсенчен пуçласа ноябрь уйăхĕччен çырса пынă.

Хуçалăх ыйтăвĕсем синчен (вутă синчен, электроэнерги синчен, суту-илÿ синчен) çырнисемсĕр пусне, Меньшагин Смоленск хулинчи нимĕç комендатури кăтартса панисене асра тытма çырнисем пур.

Çакăнта çырнисенчен хула тытăмĕ, нимĕç командованийĕ кăтартса панисене пурне те пурнăçлакан орган пулса, мĕнпе туса тăнине лайăх кăтартса парасçĕ.

Блокнотăн малтанхи виçĕ страницинче еврейсем валли «гетто» тăвасси синчен, еврейсене хĕсĕрлес тĕлĕшпе тумалли ĕçсем синчен çырса хунă.

10-мĕш страницăра, 1941 çулхи августăн 15-мĕшĕнче çапла çырса хунă:

«Тарнă поляксене пурне те тытса чармалла, комендатурăна илсе пымалла».

15-мĕш страницăра (дата кăтартман) çырса хунă:

«Козьи Горы» патĕнче тыткăна илнĕ поляксене персе пăрахни синчен халăх хушшинче сăмах сăрет-и? (Умнов валли)».

Малтанхи çырнисенчен, пĕрремĕшĕнчен, 1941 çулхи августăн 15-мĕшĕнче тыткăна лекнĕ поляксем çаплах Смоленск районĕнче пулни, иккĕмĕшĕнчен, вĕсене персе вĕлересси арестлени курăнать.

Иккĕмĕшĕнчен çырни çакна кăтартать: нимĕç командованийĕ хăй тунă преступлени синчен граждан халăхĕ хушшинче хыпар сарăлма пултарассине сехĕрленсе ÿкнипе, ятарласа пулса синчен тĕрĕслесе тухма кăтарту панă.

Çырура асăннакан Умнов вăл Смоленска оккупациленĕ хыççăн малтанхи уйăхсенче вырăс полицийĕн начальникĕ пулнă çын.

Нимĕçсен провокацийĕ пуçланса кайни

1942—43 çулсенче хĕлле вăрçăри лару-тăру нимĕçсем кĕтнĕ пек пулмарĕ, тĕпрен улшăнчĕ. Совет Союзĕн çар хăвачĕ тăтăшах вăйланса, ССР Союзĕпе союзниксем хушшинчи çыхăну çирĕпленсе пычĕ. Нимĕçсем çавăнпа провокациллĕ ĕç тума, ку тĕлĕшпе вара вĕсем Катыньри вăрманта хăйсем тунă киревсĕр ĕçсемпе усă курма шутланă, çав ĕçсене вĕсем совет влаçĕн органĕсем тунă пек кăтартма пăхнă. Çапла тунипе вĕсем вырăссемпе поляксене пĕр-пĕринпе хирĕçтерме тата хăйсен киревсĕр ĕçĕсен йĕрĕсене шăлса лартма шутланă.

Смоленск районĕнчи Куприн ялĕнчи А. П. Оглоблин священник çапла каласа панă:

«...Сталинградри ĕçсем хыççăн нимĕçсем иккĕленме пуçларĕç, çавăнпа вĕсем çак киревсĕр ĕçе тытăнчĕç.

Халăх хушшинче «нимĕçсем хăйсен ĕçне тÿрлетессçĕ» тенĕ халап сарăлчĕ».

Катыньри провокацие тытăнса, нимĕçсем чи малтан «свидетельсем» хатĕрлеме тытăннă, çав «свидетельсене» вĕсем ÿкĕтлесе, сутăн илсе тата хăратса, нимĕçсем майлă калама хĕтĕртнĕ.

Нимĕçсем «Козьи Горы» дачă çывăхĕнчи хуторта пурăнакан Парфен Гаврилович Киселев хресчене, 1870 çулта çуралнăскере, чĕнтернĕ.

Киселева гестапона 1942 çулăн вĕçĕнче чĕнтернĕ те, репресси тăвассипе хăратса, çапла суйса калама—1940 çулхи çуркунне большевиксем УНКВД-н «Козьи Горы» дачине тыткăна лекнĕ поляксене мĕнле персе пăрахнине пĕлетĕп, тесе суйса калама хушнă.

Çакăн синчен Киселев çапла каласа панă:

«1942 çулхи кĕркунне ман пата гестапоран икĕ полицай пычĕç те мана Гнездово станцинчи гестапона пыма хушрĕç. Унта эпĕ çав кунах ситрĕм. Гестапо чугун çул станцийĕпе юнашарти икĕ хутлă çуртра вырнаçнă. Эпĕ кĕнĕ пÿлĕмре нимĕç офицерĕпе тăлмач ларасçĕ. Нимĕç офицерĕ тăлмач урлă эпĕ çак вырăнта хăçантанпа, мĕн ĕçлесе пурăнни синчен тата эпĕ пурлăх тĕлĕшĕнчен мĕнле пурăнни синчен ыйтрĕ.

Эпĕ ăна çапла каласа патăм: «Козьи Горы» хуторта эпĕ 1907-мĕш çултанпах, хамăн хуçалăхра ĕçлесе пурăнатăп. Пурлăх тĕлĕшĕнчен илсен, хам вата пирки тата ывăлсем çарта пулнă пирки, пурнăçра йывăрлăхсем пур çав, терĕм. Нумай калаçса тăмасăрах нимĕç офицерĕ çапла каларĕ: гестапори сведенисем тăрăх, 1940 çулта Катынь вăрманĕн «Козьи Горы» участокĕнче НКВД сотрудникĕсем Польша офицерĕсене персе вĕлернĕ. Ку тĕлĕшпе эсĕ мĕн пĕлнине каласа пар, терĕ. Эпĕ çапла ответлерĕм: «Козьи Горы» участокĕнче НКВД сотрудникĕсем Польша офицерĕсене персе пăрахни синчен илтсен те илтменччĕ, ун пек пулма та пултарайман-тăр, мĕншĕн тесен «Козьи Горы» хуторта халăх нумай пурăнать, вăл вăрттăн вырăн мар, персе пăрахнă пулсан, ун синчен тавралли пурне халăх пĕлнĕ пулатчĕ.

Офицер мана çапла хушрĕ: апла пулин те санăн пурнĕр сынсене пăрахнине пĕлетĕп, тесе каласа пама пулать. Унăн вĕсем мана пысăк награда парăпăр, терĕç. Эпĕ офицере тепĕр хут çапла каларăм: персе пăрахнине курман, ун пек япала пирĕн вырăнта вăрçăччен пулма та пултарайман. Офицер çапах та çине тăрсах мана суйса калама хушрĕ.

Малтанхи калаçу хыççăн, эпĕ ун синчен кăтартса патăм ĕнтĕ, мана иккĕмĕш хут гестапăна 1943 çулхи февральте тин чĕнсе илчĕç. Çывăхри ялсенче пурăнакан ытти çынсене те гестапăна илсе пыни тата вĕсенчен те манран ыйтнă пек показанисем пама ыйтни çав вăхăт тĕлне маншăн паллă пулнă.

Гестапăра офицерпа тăлмач, мана малтанхи кун допрос тунăскерсемех, манран каллех 1940 çулта Польша офицерĕсене НКВД персе вĕлернĕ пек тата ăна эпĕ курнă пек туса калама ыйтрĕç. Гестапо офицерне вăл ĕç суя, вăрçăччен ун пек персе вĕлерни синчен нимĕн те илтмен, суя показани пама килĕшмостĕп, тесе каларăм. Анчах тăлмач мана итлесе пăмарĕ, сĕтел çинчен алăпа çырса хатĕрленĕ документ илчĕ те, ăна вуласа пачĕ. Унта: эпĕ, Киселев, «Козьи Горы» районĕнчи хуторта пурăнса, 1940 çулта НКВД сотрудникĕсем Польша офицерĕсене персе вĕлернине хам куртăм, тесе çырнă. Çав документа вуласа панă хыççăн, тăлмач мана ун çине алă пусма хушрĕ. Эпĕ алă пусса пама килĕшмерĕм. Вара тăлмач мана вăрçма тата хăратма пуçларĕ. Юлашкинчен вăл çапла каларĕ: «Е эсир халех алă пусаттăр, е эпир сире пĕтерсе тăкатпăр. Суйласа илĕр!»

Юнаникчен хăраса эпĕ çав документ çине алă пусрăм, çавăнпа ĕç пĕтет пулĕ тесе шутларăм».

Каярахпа, нимĕçсем Катыньри вилтăприсем çине тĕрлĕ «делегацисем» пырса кăяссине организациленĕ хыççăн, Киселева унта пынă «Польша делегацийĕ» умĕнче сăмах тухса калаттарнă.

Киселев гестапăра алă пуснă протоколăн содержанине маннă пирки пăтранса кайнă, юлашкинчен калаçма та пăрахăç тунă.

Ун хыççăн гестапо Киселева арестленĕ, пĕр уйăх çурă хушши пĕрмаях хĕнесе тытнă хыççăн, ăна çĕнĕрен «çынсем умĕнче» тухса калама килĕшÿ партарнă.

Кун синчен Киселев çапла каласа панă:

«Чăннипе ун пек пулса тухмарĕ.

1943 çулхи çуркунне нимĕçсем: Катынь вăрманĕнче «Козьи Горы» районĕнче 1940 çулта НКВД органĕсем персе вĕлернĕ Польша офицерĕсен вилтăприсене тупнă, тесе суйса пĕлтернĕ.

Çавăн хыççăн часах мая пата киле гестапо тăлмачĕ пычĕ те мана «Козьи Горы» районĕ вăрмана илсе кайрĕ.

Эпир килтен тухнă хыççăн, иксĕмĕр çеç юлсан, тăлмач мана эпĕ вăрманти сынсене пĕтĕмпех гестапăра хам алă пуснă документра çырнă пек каласа пама тивĕçли синчен асăрхаттарчĕ.

Вăрмана ситсен эпĕ чавса уçнă вилтăприсене тата палламан çынсен ушкăнне куртăм. Тăлмач мана вĕсем вилтăприсене пăхма килнĕ «Польша делегацийĕ» пулни синчен каларĕ.

Эпир вилтăприсем патне ситсен, «делегатсем» поляксене мĕнле персе вĕлерни синчен мана вырăсла ыйтусем пама пуçларĕç. Мана гестапăна чĕнсе илнĕ хыççăн пĕр уйăх ытла иртнĕ пирки эпĕ алла пуснă документа мĕн çырнине манса кайнă, çавăнпа та пăтрашма пуçларăм, юлашкинчен вара Польша офицерĕсене вĕлерни синчен нимĕн те пĕлместĕп, терĕм.

Нимĕç офицерĕ хаярланса кайрĕ, тăлмач мана «делегаци» патĕнчен туртса илсе кайрĕ те хăваласа ячĕ.

Тепĕр кунне, ирхине, ман килĕ патне гестапо офицерĕ ларнă машина пырса ситрĕ. Мана картишĕнче шыраса тупса, вăл мана арестлени синчен пĕлтерчĕ, унтан машина çине лартрĕ те Смоленск тĕрмине илсе кайрĕ...

Арестленĕ хыççăн мана нумай хутчен допроса чĕнчĕç, анчах унта, манран ыйтса пĕлнинчен ытларах хĕнетчĕç. Малтан чĕнсе илнĕ чухне мана хытă хĕнерĕç, мана вĕсем хушнă пек калаçманшăн ятларĕç, унтан камерăна хупрĕç.

Тепре чĕнсе илсен мана çапла каларĕç: эпĕ Польша офицерĕсене большевиксем персе вĕлернине хам куртăм тесе çынсем умĕнче каламалла, çакна эпĕ вĕсем хушнă пек калама тăвассине гестапо ĕненсе ситмесĕр мана тĕрмерен кăлармасçĕ. Эпĕ офицера хам çынсене куçкĕретех суя илсе калас вырăнне тĕрмере ларма килĕшни синчен каларăм. Ун хыççăн мана питĕ вăйлă хĕнерĕç.

Çавăн пек темиçе хутчен хĕне-хĕне допрос турĕç, çакна пула эпĕ пĕтĕмпех вăйсăрланатăм, начар илтекен пултăм, сылтăм алла хускатаймастăмччĕ.

Арестленĕ хыççăн пĕр уйăх иртсен мана нимĕç офицерĕ чĕнсе илчĕ те çапла каларĕ: «Куратăр-и ĕнтĕ, Киселев, эсир кутăнлайни мĕн патне илсе ситерчĕ. Эпир сире вĕлерме йышăнтăмăр. Ирхине Катынь вăрманне илсе каятпăр та çакатпăр». Эпĕ офицертан çапла тăвассине пăрахăçлама ыйтрăм, эпĕ персе вĕлернине «курнă» çын рольне юрăхсăр, мĕншĕн тесен улталама пĕлместĕп, çавăнпа та каллех мĕн те пулин пăтратăп, тесе ÿсĕтлерĕм ăна. Офицер хăйĕннех тума хушрĕ. Темиçе минутран кабинета салтаксем пырса кĕчĕç, мана резина чукмарсемпе хĕнеме пуçларĕç.

Хĕнесе асаплантарнине тÿсеймен пирки эпĕ çынсем умĕнче большевиксем поляксене персе вĕлерни синчен ултавлă сăмах тухса калама килĕшрĕм. Ун хыççăн мана çавăн пек условипе тĕрмерен кăларчĕç: нимĕçсем хушсассăнах манăн Катынь вăрманĕнче «делегацисем» умĕнче сăмах тухса калама малла...

Мана вăрмана вилтăприсенĕ чавса уçнă çĕре илсе каяс умĕн кашнинчех тăлмач ман пата киле пыратчĕ, картишне илсе тухатчĕ те, никам та ан илттĕр тесе, айăккине илсе каятчĕ, 1940 çулта НКВД Польша офицерĕсене персе вĕлернĕ тесе суйса калама кирлине çур сехет хушши пăхмасăр калама вĕренме хушатчĕ.

Эпĕ астăватăп, тăлмач мана çавăн пек каламз хушатчĕ: «Эпĕ «Козьи Горы» районĕнчи хуторта НКВД дачин çывăхĕнче пурăнатăп. 1940 çулхи çуркунне поляксене вăрмана турттарса кайнине тата унта вĕсене çĕрле персе вĕлернине эпĕ хам куртăм», темелле. Тата манăн обязательно «ку НКВД аллисен ĕçĕ», тесе каламалла пулнă.

Тăлмач мĕн каламă хушнине вĕренсе çитнĕ хыççăн вăл мана вăрмана чавса уçнă вилтăприсем патне илсе каятчĕ, мĕн вĕреннине унта пынă «делегацисем» умĕнче калаттаратчĕ. Эпĕ мĕн каланине гестапо тăлмачĕ тĕрĕслесе тăратчĕ тата мĕн каламаллине кăтартса пыратчĕ.

Пĕррехинче эпĕ темĕнле «делегаци» умĕнче тухса каларăм, манран: «Çав поляксене эсĕ большевиксем персе вĕлернине курнă-и», тесе ыйтрĕç. Мана ун пек ыйту çине ответ пама хатĕрлеменччĕ, çавăнпа та эпĕ чăннипе мĕнле пулнине каларăм,—вăрçă пуçланиччен Польшăн тыткăна илнĕ çар çыннисене курнă, мĕншĕн тесен вĕсем çул тунă çĕрте ĕçлетчĕç, терĕм. Çавăн хыççăн тăлмач мана айăккинелле хыттăн туртса кайрĕ те хăваласа ячĕ.

Мана ĕненме ыйтатăп: манăн ун пирки яланах чун тарăхатчĕ, мĕншĕн тесен Польша офицерĕсене чăннипе нимĕçсем 1941 çулта персе вĕлернине эпĕ пĕлнĕ, анчах та манăн урăхла май пулмэп, мĕншĕн тесен эпĕ мана çĕнĕрен арестлессинчен тата асаплантарассинчен пĕрмаях сехĕрленсе пурăнаттăм».

П. Г. Киселев хăйне гестапăна чĕнсе кайни, ун хыççăн арестлени тата хĕнени синчен каласа панине хăйпе пĕрле пурăнакан унăн арăмĕ Аксинья Киселева, 1870 çулта çуралнă, унăн ывăлĕ Василий Киселев, 1911 çулта çуралнă, тата кинĕ Мария Киселева, 1918 çулта çуралнă, çавăнпа пĕрлех тата хуторта Киселев патĕнче пÿлĕм йышăнса тăракан сул-йĕр мастерĕ Тимофей Иванович Сергеев, 1901 çулта çуралнă, çирĕплетсе парасçĕ.

Киселева гестапăра чăлахлантарнине (хулпуççине суранланине, начар илтекен тунине) врачсем медицина енчен тĕрĕслесе акта çирĕплетсе кăтартнă.

(Малалли пулать).

Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунĕ умĕн

ШАНХАЙ, мартăн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Китайри хĕрарăмсем Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунне уявлама пысăк хастарлăхпа хатĕрленессçĕ.

Шанхайри демократиллĕ хĕрарăмсен федерацийĕн организациллĕ ĕçсен пайĕн заведующийĕ Чжао Сянь çапла каласа панă: Шанхая ирĕке кăларнă хыççăн хулара хĕрарăмсен чылай общественниксемпе организацийĕсене тунă. Вĕсене ертсе пырас ĕçе Шанхайри демократиллĕ хĕрарăмсен федерацийĕ хăйĕн аллине илнĕ. Ку организацире 1.400 пин хĕрарăм тăрать. Федераци хĕрарăмсене халăхăн центральнăй правительстви йышăннă решенисене пурнăçлама мобилизацилес тĕлĕшпе нумай ĕçленĕ. Шанхайри хĕрарăмсем пĕтĕм Китай халăхĕ Америка агрессине хирĕç тата Корейăна пулăшу парассишĕн кĕрешес ĕçе активлă хутшăнассçĕ.

Хальхи вăхăтра хулари пир-авăр фабрикисенче тата ытти предприятисенче ĕçлекен работницăсенчен икĕ пин çын профсоюз членĕнче тăрать, Шанхай çывăхĕнчи ялсенчи хресчен хĕрарăмĕсенчен 76 пин çын хресченсен союзĕсенче члента тăрассçĕ, аслă шкулсенче вĕренекен студенткăсемпе вăтам шкулсенче вĕренекен хĕрачасем—пĕтĕмпе 36 пин çын студентсен союзĕсен активлă членĕсем.

Чылай хĕрарăмсем производствăри ăмăртăва пуçарассçĕ, ĕçре малта пырассçĕ, культурăпа сутĕç учрежденийĕсене тата ытти учрежденисене ертсе пыракансем пулса ĕçлессçĕ.

Шанхайри хĕрарăмсем производствăри çĕнĕ специальноссене вĕренсе пырассçĕ. Нумай хĕрарăмсене администраци ĕçĕн тата парти ĕçĕн ертсе пымалли вырăнĕсене лартнă. Çапла, хулари тĕрлĕ учрежденисенче ответлă вырăнсенче 144 хĕрарăм ĕçлет. Шанхайри халăх представителĕсен юлашки конференцийĕн делегачĕсем хушшинче 135 хĕрарăм пулнă, государствăн тĕрлĕ учрежденийĕсемпе общественлă организацисенче ответлă вырăнсенче 6.412 хĕрарăм ĕçлет.

Килхуçи-хĕрарăмĕсем хушшинче хут пĕлменлĕхе пĕтерес тĕлĕшпе халĕ нумай ĕçлессçĕ.

Пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен федерацийĕ американецсем Корейăра бактериллĕ хĕçпăшалпа усă курнине хирĕç протестлет

ВЕНА, мартăн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен федерацийĕн хăйĕн генеральнăй секретарĕн Луи Сайянăн Пĕрлешнĕ нацисен организацине янă çакăн пек телеграммине пичетлесе кăларнă.

«Пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен федерацийĕ Пĕрлешнĕ нацисен организацийĕн ялавĕпе витĕнсе Корейăра çапăçакан Америка çарĕн чăсĕсем юлашки вăхăтра ирсĕр меслетсемпе усă курнине хирĕç протестлет.

Пĕтĕм Китайри профсоюзсен федерацийĕ Пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен федерацине американецсем Корейăри фронтра та, тылра та чумăпа холера бактерийĕсене нумай сарни синчен пĕлтерчĕ. Çав преступленисем синчен пĕлтерни тÿрĕ кăмăллă мĕнпур арçынсемпе хĕрарăмсене те хытă тарăхтарчĕ. Çак тискерлĕх вăл сĕршер çул каярах пулнă ĕçсене тата нацистсем тунă концентраци лагерĕсем синчен эпир малтанхи хут илтсен мĕнле шухăш-туйăмлă пулнине аса илтерет.

Пĕрлешнĕ нацисен организацийĕ медицинăри тата наукăри çĕнĕ открытисемпе преступлениллĕ ĕçсем тăвассинче тата пĕр сĕршывăн гражданла пĕтĕм халăхне пĕтерсе тăкас ĕçре усă курма ирĕк панинчен питех те тĕлĕнмелле.

Пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен федерацийĕ Пĕрлешнĕ нацисен организацине çав преступлениллĕ ĕç синчен—халиччен алă пусса çирĕплетнĕ договорсене пăсса тата этемлĕхе хисеплес тĕп принципсене—Пĕрлешнĕ нацисен организацийĕ хÿтĕлеме тивĕçлĕ принципсене пăсса тунă киревсĕр ĕçсем синчен пĕлтерет.

Пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен федерацийĕ тÿрĕ кăмăллă мĕнпур çынсене наука юлашки вăхăтра тунă çитĕнÿсемпе тискер ĕçсем тума усă курассине чарса лартма, Корейăри вăрçа, халăха пĕтермелли чи хăрушă хĕçпăшалпа усă куракан тата ăна сăнаса пăхакан вăрçа чарса лартма пур майсемпе те тăрăшма чĕнет.

Луи Сайян».

Корейăри ĕçсем

ХАЛĂХ ÇАРĔН ГЛАВНĂЙ КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, мартăн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн главнăй командованийĕ паян çапла пĕлтернĕ:

Корея Халăх çарĕн соединенийĕсем Китай халăх добровольцĕсен чăсĕсемпе пĕрле тăшмана хирĕç халиччен хи вырăнсенчех оборонăра тăрса çапăçассçĕ.

Корея Халăх çарĕн зенитнăй чăсĕсем тата самолетсене хирĕç çапăçакан салгакĕсем тăшманăн çичĕ самолетне персе ÿкернĕ, çав самолетсем уйччен, ытти самолетсемпе пĕрле, тылри районсене тискеррĕн тапăннă çĕре хутшăннă пулнă.

Демократиллĕ Корея Халăх Республикин çар комитечĕ Америка интервенчĕсем бактериллĕ хĕçпăшалпа усă курнине хирĕç кĕрешмелли мерăсем çинчен приказ кăларнă

ПХЕНЬЯН, мартăн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин çар комитечĕ Америкăн бактериллĕ хĕçпăшалпа усă куракан интервенчĕсен тискерлĕхĕсене хирĕç кĕрешмелли мерăсем синчен кăларнă приказа пичетленĕ. Приказра çакна палăртнă: Америкăн интервентла çарĕсем бактериллĕ хĕçпăшалпа усă курса мирлĕ халăха, Корея Халăх çарĕн воинĕсемпе Китай халăх добровольцĕсене пĕтерсе тăкма хăтланассçĕ, тенĕ.

Интервентсем 1950 çулăн юлашки уйăхĕсенчен пуçласа чечче чирĕн бактерийĕсене сарса, пăчăхтарса вĕлерекен газ тултарнă бомбăсем пăрахса нумай çынсене вĕлерчĕç, çапла вара вĕсем тĕнчери сĕршывсем пĕр-пĕрин хушшинче йышăннă правăсен нормисене сĕмсĕррĕн пăсса пычĕç. Январьпе февраль уйăхĕсенче, тенĕ малалла приказра, интервентсем Банвон, Хванхэ, Кăнтăр тата Çурçĕр Пхенап провинцийĕсен тĕрлĕ районĕсенче чума, холера тата ытти хытă сарăлакан чирсем ертнĕ тĕрлĕ хурт-кăпшанкăсене пăрахса çÿренĕ. Америка интервенчĕсен халăха вĕлерсе пĕтермелли планĕсене путлантарса лартас тата ерекен чирсем сарăлассине чарса лартас шутпа, çар комитечĕ çапла приказ парать:

Государствăн чир-чĕрсем сарăлассине чарса лартас тĕлĕшпе ĕçлекен чрезвычайнăй комитечĕн председателĕн пĕтĕм халăха хытă сарăлакан чирсене хирĕç кĕрешме тата тăшман пăрахнă бактериллĕ хурт-кăпшанкăсене пур майсемпе те пĕтерсе пыма мобилизацилемелле.

Сывăхха сыхлас ĕç министрĕн, çар медицини служби управленийĕн начальникĕн, Пхеньян провинцинчи тата ытти мĕнпур провинцисенчи чир-чĕрсем сарăлассине чарса лартас тĕлĕшпе ĕçлекен комитетсен председателĕсен милици тата ерекен чирсене хирĕç кĕрешекен отрядсем оперативлă ĕçлессине пурнăçа кĕртсе пымалла; пĕтĕм халăха тата çар чăсĕсенчи çынсене пурне те прививка тумалла; карантин пулмалли йĕрке тунă районсенчен апат-çимĕç, тумтир тата ытти япаласене илсе тухма чарас; пур пунктсене те дезинфекци тумалли хатĕрсене памалла; шалти ĕçсен министрĕн пур хуласенче ялсенче те, учрежденисенче те тата предприятисенче те контроль отрячĕсем тумалла.

Приказра малалла ерекен чирсене саракан йĕкехÿресене тата ытти çавăн йышши кайăксене хирĕç кĕрешме кирлине палăртнă. Приказ çине Демократиллĕ Корея Халăх Республикин çар комитечĕн председателĕ Ким Ир Сен алă пуснă.

КИТАЙ ХАЛĂХĔ АМЕРИКАНЕЦСЕМ КОРЕЙĂРА БАКТЕРИЛЛĔ ХĔÇПĂШАЛПА УСĂ КУРНИНЕ ХИРĔÇ ПРОТЕСТЛЕТ

ПЕКИН, мартăн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентстви çапла пĕлтерет:

Китайри медицина работникĕсем ерекен чирсене хирĕç, Америка агрессорĕсем бактериллĕ хĕçпăшалпа усă курнă пирки сиксе тухакан чирсем сарăлассине хирĕç кĕрешме Корейăна каясшăн. Чунцинра медицина работникĕсем ерекен чирсем сарăлассине хирĕç кĕрешекен отряд тума, çав отряда Корейăна чума чирне хирĕç кĕрешмешкĕн яма йышăннă.

Сиань хулинчи медицина шкулĕсенче вĕренекен сĕршер студентсем хăйсем Корейăна ерекен чирсене хирĕç кĕрешме кайма шут тытни синчен пĕлтернĕ.

Чанда хулинче Япони агрессорĕсем 1941 çулта бактериллĕ хĕçпăшалпа сăнаса пăхмалли вырăн пур тăнă хула пулнă. Халĕ çав хулара пурăнакансен пысăк митингĕ пулнă. Митинга пухăннисем Америка сыннĕсĕрен бактериллĕ хĕçпăшалпа усă курса преступлениллĕ ĕçсем тунине хирĕç хытă протестленĕ.

Митинга пынисенчен пĕри çапла каланă: «Вĕлерекен бактерисемпе японецсем манăн пĕтĕм çемьене вĕлерсе тăкрĕç. Халĕ Америкăн тискер çыннисем Корейăра çавăн пек ĕçех тăвассçĕ, çав çын вĕлеренсене хăйсен преступленийĕсемшĕн ответ тыттармалла!»

1941 çулта японецсем бактериллĕ хĕçпăшалпа усă курнине пула чума чирĕ сарăлнă пулнă. Çавăн чухне Цзян Синьпайпа Хэ Фу-цзинăн ачисем те вилнĕ. Цзян Синь-цай тата Хэ Фу-цзинь митинга сăмах тухса каланă. «Пирĕн хаклă ачасем Япони преступникĕсен аллинчен, японецсен бактериллĕ вăрçинче пула вилчĕç. Халĕ Япони преступникĕсемпе килĕшÿллĕ американецсем кайрĕç, вĕсем пирĕн Корейăри халăхлă добровольцсене пĕтерсе тăкма бактериллĕ хĕçпăшал сараççĕ. Америкăн çыннисене хытă айăпласа наказани парас пулать», тенĕ вĕсем.

Аслă писателе хисеплесе асăнса

Чăваш педагогика институтĕнчи преподавательсем, студентсем вырăссен аслă писателĕ Николай Васильевич Гоголь вилнĕренпе 100 çул çитнине анлă паллă тăвассçĕ.

Историпе филологи факультечĕн литература уйрăмĕнче вырăссен аслă писателĕн пурнăçĕпе творчестви синчен каласусем пулса иртрĕç. Ытти факультетсенче те Гоголĕн произведенийĕсем вырăс литератури мĕнле вырăн йышăнса тăни синчен темиçе калаçу иртерĕ.

Библиотекăра Н. В. Гоголь çырнă кĕнекесен витринине тата унăн произведенийĕсем тăрăх тунă ÿкерчĕксен выставкине йĕркеленĕ. Библиотека работникĕсем пулăшнипе институтăн коридорĕнче те пысăк фотовитрина организациленĕ.

Институтри чылай студентсем хулари шкулсенче отряд вожатăйĕсем пулса ĕçлессçĕ. Вĕсем Гоголе асăнса пионерсен сборĕсене ирттерме пулăшассçĕ. Сборсенче Гоголĕн «Тарас Бульба», «Ревизор» тата ытти произведенийĕсене сÿтсе явассçĕ, пионерсем Гоголь произведенийĕсенчи уйрăм сыпăксене пăхмасăр калама вĕренессçĕ.

Мартăн 5-мĕшĕнче чăваш академи театрĕнче Н. В. Гоголе асăнса институтри преподавательсемпе студентсен касĕ пулать. Унта «Н. В. Гоголь—вырăссен аслă писателĕ» тема тăрăх доклад тăвассçĕ. Художествăллă пултарулăх коллективĕн членĕсем Н. В. Гоголь çырнă «Авлану» комедие лартса парассçĕ.

Н. В. Гоголь кĕнекисене нумай сутнă

Юлашки виç-тăват уйăх хушшинче Чăваш книготорг магазинĕсенче вырăссен аслă писателĕн Н. В. Гоголĕн кĕнекисене 13 пин экземпляра яхăн сутнă. Вăл шутра чăвашлисем—6.400 кĕнеке. Магазинсенче пуринчен ытла Гоголь вилнĕренпе сĕр çул тултарнă тĕле чăвашла кусарса кăларнă «Ревизор» комедие, «Тарас Бульба» повеçе, «Иван Ивановичпа Иван Никифорович мĕнле хирĕçсе кайни синчен» çырнă повеçе тата ыттисене те нумай сутнă.

А. П. Чеховăн „Три сестры" пьесине лартассçĕ

Мартăн 1-мĕшĕнчен пуçласа Чăваш государство академи театрĕ А. П. Чеховăн «Три сестры» пьесине вырăсла лартса пама тытăнчĕ.

Постановкăна Чăваш АССР халăх артисчĕ Е. Токмаков хатĕрленĕ.

Тĕп рольсенче—артистка П. Николаевская (Ольга), Чăваш АССР тава тивĕçлĕ артистки М. Каширская (Маша), Т. Павлова (Ирина), республикăн тава тивĕçлĕ артисчĕ А. Луняк, А. Гусев, П. Пустовойтов т. ыт. выляссçĕ.

Экскурсире пулчĕç

Колхозсенчи пуçламăш парторганизацисен секретарĕсен ВКП(б) обкомĕ çумĕнчи пĕр уйăхлăх курсĕнче вĕренекенсем Шупашкарти электроаппаратура заводĕнче тата пир-авăр комбинат строительствинче экскурсире пулчĕç.

Экскурсире вĕсем çĕнĕ машинăсемпе, механизмсемпе паллашрĕç, паллă стахановецсемпе тĕл пулса калаçрĕç.

Электроаппаратура заводĕнчи паллă стахановец, РСФСР Верховнăй Совечĕн депутачĕ Е. Ефимов юлташ, паллă фрезеровщик орденоносец Корнилов юлташсем хăйсен ĕçри çĕнĕ çитĕнĕвĕсем синчен каласа пачĕç.

В. ИГНАТЬЕВ.

Пĕлтерни

Мартăн 5-мĕшĕнче, 20 сехетре, ВКП(б) хула комитечĕн парткабинетĕнче «ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» пĕрремĕш çул вĕренекенсен кружокĕсен руководителĕсем валли: «И. В. Сталин юлташ «Марксизм тата чĕлхе вĕрентĕвĕн ыйтăвĕсем» ятлă ĕçсенче диалектикăллă тата историллĕ материализма малалла аталантарни синчен» темăпа лекци пулать.

Лекцие П. Л. Лебедев юлташ вуласа парать.

ВКП(б) ХУЛА КОМИТЕЧĔ.

Ответлă редактор заместителĕ И. П. ПАВЛОВ-ПИНЕР.

ЧĂВАШ ГОСУДАРСТВО АКАДЕМИ ТЕАТРĔНЧЕ
Ыран, мартăн 6-мĕшĕнче, чăвашла спектакль „Ревизор"
Спектакль каçхине 20 сехетре пуçланать.

„Родина" кинотеатрта
Мартăн 5-мĕшĕнчен пуçласа Китайăн кăларнă çĕнĕ фильм «СЫН СТЕПЕЙ» кăтартма пуçлаççĕ.
Сеанссем 12, 14, 16, 18, 20 тата 22 сехетре пуçланаççĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: ответлă редактор—0-67, ответлă редактор заместителĕ—3-99, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленноçть пайĕ—5-74, информаци пайĕ—5-74, парти пурнăç пайĕ—4-17, хуçалăх пайĕ—3-97, пропаганда пайĕ—8-61, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 01253 Типография № 1 Чувашполиграфиздата. Тираж 20.000 экз.